Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕр №-рĕ 10 пус. 19-мĕш çул тухать.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937
НОЙАБĔР
26
ЕРНЕКУН
270 (4782)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Декаберĕн 12-мĕшĕ—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун

Совет суйлавçи прависене сыхламала

Пирĕн çĕршыв ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн суйлавне хатĕрленмели хаваслă кунсенче пурăнать. Совет Сойузĕн граждăнĕсем халиччен курман политикăла активлăх тата гражданинăн тивĕçне тарăнăн йăланнине кăтартаççĕ, рабочисемпе хресченсен государствин аслă оргăнĕнче пулма кам çине шанчăк хурасси тĕлĕшпе чăн-чăн хуçасем пулма тăрăшаççĕ.

Социалисăмла тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсемшĕн тата хĕрĕсемшĕн, вĕсен сăмахĕ ĕçрен уйрăм мар çынсемшĕн, тăван çĕршывшăн пĕтĕм чĕререн тăракан, Маркс—Енгелс—Ленин—Сталин йалавĕшĕн шанчăкла тăракан çынсемшĕн сасă парар!—çакă пулать суйлав умĕнхи пухусенче, кружоксенче тата калаçусенче пĕтĕм чĕререн тухса калакан вуншар пин тата çĕршер пин суйлавçăсен сăмахĕсенчи аслă шухăш. Рабочисем, работницăсем, колхозниксем, колхозницăсем, красноармейецсем, служăшчисем, ĕç интеллигенцин представителĕсем, килхуçи хĕрарăмсем, стариксем-пенсионерсем—пĕтĕм совет халăхĕ хăватлă çĕкленӳпе пĕрлешрĕ. Вĕсен шухăшĕ çапла—ССР Сойузĕн Аслă Советне государства деятелĕсене, социалисăмла çĕршыва малала та Ленин тата Сталин кăтартса панă çулпа илсе кайма пултарулă çынсене, суйламала.

Аслă Совета депутата суйлама палăртнă, округсенчи суйлав комиссисем регистрациленĕ кандидатсемшĕн агитацилесси пур çĕрте те сарăлса пырать. Çак агитацийе суйлавçăсем хăйсем, рйадовой совет çыннисем туса пыраççĕ, вĕсен хисепĕнче мĕн чухлĕ те пулин нумай халăхла пухура пурнăçĕнче чи пирвайхи хут трибуна çине тухакансем те сахал мар. Хĕрӳлĕ тата аслă шухăшсем ĕнтĕ мĕн чухлĕ калана! Совет суйлавçисем тăван çĕршыв çинчен, хăйсен телейлĕ пурнăçĕ çинчен, хăйсен ачисен телейлĕ пуласлăхĕ çинчен çав тери хĕпĕртесе тата савăнса калаççĕ! Вĕсем ĕлĕкхи ылханлă пурнăçа çав тери тарăхса аса илеççĕ,—çав ылханлă пурнăça 1917 çулхи Октаберте тĕп тунă!

Совет гражданинĕн прависемпе обйазаннăçĕсене етемлĕхĕн аслăран та аслă документĕнче—Сталинла Конституцире уççăн çырса хунă,—ирĕклĕ те телейлĕ совет халăхĕ çитес кунсенчех ĕнтĕ Сталинла Конституцийе Пĕтĕм Сойузри Советсен Чрезвычайлă VIII-ш Сйесĕ çирĕплетнине уйавлать.

Совет влаçĕн оргăнĕсене пурне те тивĕç, пĕртан, тӳрех суйлав правипе вăрттăн сасăласа суйласси—ку вăл совет граждăнĕсен прави тата чи таса обйазаннăçĕ. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени"—пирĕн суйлав саккунĕ—Сталинла Конституцине пĕтĕмпех шайлăн. Вăл пирĕн тăван çĕршывăн граждăнĕсем влаçăн чи аслă оргăнне депутатсем суйламали йĕркесем çинчен тĕплĕн калать. Суйлав саккунĕ совет гражданинĕ хăйĕн сасă парас правипе усă курма пултарать тесе пĕлтерет çеç мар, халăхăн пур сийĕсене валльди те суйлава хутшăнма чи лайăххăрах условисем тума кăтартса парать. Положенине йатарласах кĕртнĕ статйасем тăрăх, ача çуратмали çуртсенче, пароходсем çинче, больницасенче суйлав иртермели йĕркесене, хут пĕлмен çынсем, инвалидсем сасăламали йĕркесене аса илсен те çителĕклĕ пулать.

Кашни суйлавçă хăйĕн правипе усă курассине гарантилеме—суйлав саккунĕн пур статйисене те тĕрĕс те тĕплĕн пурнăçа кĕртмеле. Анчах партипе совет организацисем, хула тата район совечĕсем нумайĕшĕ организацилĕ-техническу ĕçсене манса кайаççĕ. Тата час-часах „технически" ĕç тени,—ку хутра нимĕнле сăлтав çук çĕртенех, иккĕмĕш вырăнти ĕç, „ответлă мар ĕç", тесе шухăшлаççĕ.

Организацилĕ ĕç çине йĕрĕнсе пăхни—большевикла пахалăх мар. Районри организацисем суйлава организацилĕ хатĕрленессинчен пăрăннă йе çак ĕçе тума йурăхлах мар çынсене шанса панă çĕрте, тĕрĕссипе илсен, совет суйлавçин прависене хĕсекен йăнăшсем пит нумай пулаççĕ.

Правасене çавăн пек хĕсни, чи малтан, суйлавçăсен спискисене тунă чухне, унтан вĕсене пăсса пĕтерсе тата сиктерсе хăварса пичетлесе кăларнипе тата йăнăшсене тӳрлетнĕ чухне волокитă тунипе пулать.

Совет граждăнĕсене суйлавçăсен спискисене кĕртмесĕр хăварнисем, хушаматсене, йатсемпе ашшĕ йачĕсене, миçе çултине пăсса пĕтернисем, инвалидсене, стариксене, йединоличниксене спискăсем çинчен саккунсăр кăларса пăрахнисем сахал пулман. „Правда" редакцине урăх йышши пăсăксем çинчен—хăшпĕр Советсем спискăсем çине таксанах вилнĕ çынсене тата... тин çеç çуралнă пĕчĕк ачасене те кĕртни çинчен сигналсем килеççĕ (Ворошиловск, Орджоникидзе крайĕ).

Çак фактсем нумайĕш советсен ответсăрла ĕçĕ çинчен калаççĕ. Кашни суйлав участки тăрăх суйлавçăсен спискисене питĕ тĕрĕс тăвасси вĕсен тӳрĕ обйазаннăçĕ. Ĕç ытла шутсăр йăвăрах та мар пек туйăнать, анчах та вăл ĕçе чылай райозсенче йапăх тунă.

Суйлавсем пуçланиччен шутлă кунсем кăна йулчĕç. Ĕçсĕр аптă ранă тата павракан çынсен айăпĕпе, хăйĕн ĕçне тума пĕлмен пĕр-пĕр совет айăпĕпе суйлавçă сасăламасăр йулмала ан пултăр. Нумай советсем хăйсен йăнăшĕсене тӳрлетме васкаманни çинчен пĕлтерекен сигналсем те пур, çав вăхăтрах саккунра: суйлавçă панă зайавленийе пăхса тухнă хыççăн виçĕ кунран кайа хăвармасăр тӳрлетӳсем кĕртмеле йе ăна зайавленине мĕн сăлтавпа йышăнманни çинчен справкă çырса памала тесе питĕ тĕрĕс кăтартса панă. Хăшпĕр çĕрте саккунлă мар тӳрлетӳсем кĕртеççĕ. Сăмахран, Ростов облăçĕнчи Семикаракорск районĕнчи Кочетковск йалсовет председателĕ суйлавçăсем каланă тăрăхах, хăй тĕллĕнех, нимĕн тĕрĕслемесĕрех тӳрлетӳсем кĕртет.

Суйлавçăсен спискисенчи тĕрлĕрен пăсăксемпе тĕрĕсмарлăхсем совет граждăнĕсен прависене пăснине тата тăшманла елементсене совета хирĕçле ĕç тума хушăк пулса тăнине ĕнентерме кирлех те мар.

Суйлавсен кунĕнче, 1937 çулхи декаберĕн 12-мĕшĕнче, кашни гражданинăн суйлав йĕшчĕкĕ патне суйлав саккунне çак суйлав округĕнче баллотировкăна тăракан кандидатсен йачĕсене тĕрĕс пĕлсе, суйлав бӳллетенне мĕнле тултармаллине т. ыт. пĕлсе пыма тивĕçлĕ. Çакă вăл хальхи вăхăтра агитацилле-пропагандăла ĕçе кашни кун тимлĕн туса пыма кирлине пĕлтерет, çак ĕç мĕн тери кирлине партипе профсойузсен нумай организацийĕсем пайанччен ăнланса илмен-ха. Суйлав умĕнхи кампании çак йенĕ çине те питĕ тимлĕн çавăрнăса пăхас пулать, мĕншĕн тесен суйлавçă „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" тата кандидатсене пĕлменни ăна хăйĕн тивĕçне пĕтĕм ответлăхĕпе пурнăçа кĕртме чăрмантарать.

Пирĕн çĕршывăн ĕççыннисем округсенчи суйлав умĕнхи канашлусенче доверенăйсем суйласа вĕсене агитацилĕ-пропагандăла ĕç тума суйлав участкисене йачĕç. Партипе профсойуз организацисен чи малтанхи обйазаннăçĕ—доверенăйсеве опытлă большевикла агитаторсемпе тата пропагандиссемпе пулăшасси. Доверенăйсен задачĕ пархатарлă та ответлă: унăн участкинчи кашни суйлавçă суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидатсем çинчен, ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидатсене сасăламали йĕрке çинчен пĕлсе тăмала. Доверенăйсемпе унăн активĕ мĕнле ĕçленинчен—суйлавсен кунĕнче кашни участкăра суйлавçăсем организацилĕ пуласси чылай килет.

Суйлав иртермели çуртсене вăхăтра, саккун хушнисене пурне те пурнăçа кĕртсе хатĕрлес пулать, вĕсене йĕркелессине çакна асра тытса тумала—суйлавçăна лайăх, майлă пултăр. Йалти вырăнсенче, суйлавçăсем — хресченсем суйлав çуртĕнчен инçетре, пурăнакан çĕрте пайанах ĕнтĕ транспорт хатĕрлесси çинчен шухăшласа хумала.

Советсен тата парти районри организацисен руководителĕсен çакна асра тытмала—организацилле тата агитацилле-пропагандисла ĕçре кăштах тĕрĕсмарлăхсем пулсанах суйлавçăн правине хĕсни пулса тăрать. Çавăнпа халĕ суйлава хатĕрленес ĕçри çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтерме мĕн кирлине пурне те тумала.

Влаçăн аслă оргăнне суйлас аслă та хисеплĕ правана хамăрăн аслă тăван çĕршывăн граждăнĕсене панă. Кашни парторганизацин тата советăн таса обйазаннăçĕ—суйлав кампанинчи çитменлĕхсене хăвăрт тата татăклăн пĕтерессипулать. Халĕ пирĕн пĕтĕм çĕршывра çĕкленнĕ, пит пысăк политикăла активлăх суйлавçăсен масси çĕр процентпех суйлава хутшăннине тивĕçлĕн вĕçлентĕр.

(„Правда" умстатйи).

Ленинградри суйлавçăсем Национальнăçсен Советне депутата суйламали кандидат М. И. Калинин йулташпа тĕл пулни

Ленинград ĕççыннисен митингĕнче 200 пин çын ытла пулнă

ЛЕНИНГРАД, нойаберĕн 24-мĕш (ТАСС). Нойаберĕн 24-мĕшĕнче пулнă хулари питĕ пысăк митингра Ленин хулинчи ĕççынисем хăйсен Национальнăçсен Советне депутата суйламали кандидачĕпе М. И. Калинин йулташпа тĕл пулнă.

Урицки пысăк плошчĕдĕ тата вăл плошчĕде тухакан урамсем рабочисен, работницăсен, инженерсен, служăшчисен, красноармейецсен, краснофлотецсен, килхуçи хĕрарăмсен, вĕренекенсен колоннисемпе 200 пин ытла çынпа тулса ларнă. Вĕсем митинга хăйсемпе пĕрле нумай йалавсем, партипе правителствă руководителĕсен портрĕчĕсене, пирĕн çĕршывăн патриочĕсемшĕн, рабочисемпе хресченсен телейĕшĕн, коммунисăмшăн тӳрĕ кĕрешекен борецсемшĕн сасăлама чĕнекен çĕршер лозунгсем илсе пынă.

Трибунă çине М. И. Калинин тухсан плошчед тăрăх хаваслă „урра" йанраса кайнă. Митингри халăх Питĕр ватă рабочине, Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет тата ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателне хĕрӳлĕ кĕтсе илнĕ. Калинин йулташпа пĕрле, трибунă çине Угаров, Цветков, Петровский йулташсем т. ыт. те улăхаççĕ.

Митинга Кировски завод рабочи-стахановец Карташев йулташ уçать.

Чи малтан С. М. Киров йачĕпе тăракан „Електросила" заводри рабочисен представителĕ Йу. Йе Скоробогатко йулташ сăмах тухса калать.

„1917 çулхи октабĕр кунĕсенче,—тет Скоробогатко йулташ,—çакă плошчедре хĕспăшалланнă пролетариат коммунистсен партийĕ, вĕсен çулпуçĕсем Ленинпа Сталин йертсе пынипе капиталисăма вилмеллĕх çапса салатрĕ.

Пирĕн çĕршыв чухăн, тĕттĕм Руçран çак çулсенче пултарулă, социалисăм çĕршывĕ пулса тăчĕ. Пирĕн тăван çĕршыв çинче Сталинла Конституцин çута хĕвелĕ йалкăшать. Хаваслăхшăн, телейшĕн, канăç, ĕç, вĕренӳ прависемшĕн, епĕр мĕн тума пултарнишĕн пуриншĕн те аслă тăван Сталина пирĕн спасибă. (Хавасланса кăшкăрса тăвăллăн алă çупаççĕ).

Кун çывхарса килет, ун чухне епĕр пирĕн тăван çĕршывăн лайăх ывăлĕсемшĕн, Ленинăн—Сталинăн тӳрĕ соратникĕсемшĕн—пирĕн рабочисемпе хресченсен президенчĕшĕн Михаил Иванович Калининшăн (урра кăшкăраççĕ, тăвăллăн алă çупаççĕ) тата Ленинград большевикĕсен паттăр руководителĕ Жданов йулташшăн (тăвăллăн алă çупаççĕ,) Литвинов, Петровский, Дыбенко йулташсемшĕн сасăлатпăр.

Темиçе вунă çул кайала Маркспа Енгельс Йевропа тăрăх коммунисăм ĕмĕлки çӳрет, тесе çырнă. Вăл ĕмĕлкене хирĕç Йевропăн пĕтĕм реакцилĕ вăйĕсем пĕрлешрĕç. Анчах та, халĕ коммунисăм ĕмĕлке мар ĕнтĕ. Вăл чăн-чăн коммунисăм. Епĕр шанчăклах калама пултаратпăр: Сталин йулташ йертсе пынипе пирĕн коммунисăма пыракан йухăма чарса лартма пултаракан вăйсем çук." (Хавасланса, кăшкăрса тăвăллăн алă çупаççĕ, „урра" кăшкăраççĕ).

Сăмах М. И. Калинин йулташа параççĕ. („Урра" йанрать, сасăсем йанраса кайаççĕ. „Сывă пултăр Сталин йулташăн тӳре соратникĕ, пирĕн президент, Питер ватă рабочийĕ Калинин йулташ!", сывă пултăр Михаил Иванович, Калинин йулташа „урра!").

Йулташсем! Ленинград рабочисене, интеллигенцине тата Ленинград хулинчи пĕтĕм граждăнсене саламлатăп. (Алă çупаççĕ).

Манăн сăмах кĕске пулать. Вун сакăр кунтан пирĕн ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламала. Епĕ шухăшлатăп, Ленинград рабочисем, ĕçлĕх интеллигенцийĕ, Ленин хулинчи пĕтĕм граждансем Ленинград ĕççыннисем Совет влаçĕн тӳрĕ тĕрекĕ пулнине пĕтĕм тĕнчене кăтартĕç.

Ленинград йаланах коммунисла партин тĕрекĕ пулнă. Епĕ иккĕленместĕп, Ленинград хули пулас суйлавра та хăй Пĕтĕм Сойузри Коммунисла (большевиксен) Партине тата унăн çулпуçне Сталин йулташа парăннине, йуратнине кăтартĕ.

Сывă пулччăр Ленинград рабочийĕсем!

Сывă пултăр коммунисла парти!

Сывă пултăр унăн çулпуçĕ Сталин йулташ!

(Сталин йулташпа Калинин йулташ йачĕпе, Ленинград большевикĕсен руководителе Жданов йулташ йачĕпе, партипе правителствă йачĕпе, Ленинградран тăратнă ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали кандидат йачĕпе хавасланса кăшкăрса тăвăллăн алă çупаççĕ. Нумай вăхăт хушши „урра" кăшкăраççĕ, саламлă сасăсем йанраççĕ: „Сывă пултăр халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!", „Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн тӳре соратникĕ—Михаил Иванович Калинин!", „Сывă пултăр Жданов йулташ!

Митинг йуратнă Сталин патне саламлă çыру йама панă сĕнӳве пысăк çĕкленӳпе йышăнать. Пĕр хăвăспа çĕкленнĕ çĕршер пин аллăсем Ленинград ĕççыннисем хăйсем коммунисла партине тата ĕççыннисен генилĕ çулпуçне Сталин йулташа чикĕсĕр йуратнине кăтартаççĕ.

Митинг пĕтнĕ. Халăх нумай вăхăт хушши саланмасăр тăрать. Сталин йулташ тата Калинин йулташ йачĕпе саламлă кăшкăрусем пĕр татти сыпписĕр илтĕнеççĕ.

Калинин йулташ аллинчи чечексен букечĕпе, çĕлĕкне хывса Ленинград ĕççыннисене саламлать. Ăна ответлесе пиншер алă çĕкленеççĕ, питсем кăмăллă кулса çуталаççĕ, урра йанăрать, сасăсем илтĕнсе кайаççĕ: „урра" Калинина, урра. Питĕр пролетарипе социалисăмла çĕршыв президентне!"

Мускаври Сталински суйлав округĕнчи Сталински районри суйлавçăсен митингĕ

Столицăри Сталински суйлав округне кĕрекен Сталински районĕнчи 80 пин суйлавçă, нойаберĕн 24-мĕшĕнче, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас умĕнхи митинга пухăннă.

Л. М. Каганович йачĕпе тăракан прожектор заводĕнчи ватă работницă-стахановка Анна Васильевна Павлова мастăжарт завочĕн çамрăк слесарĕ—стахановец Павел Федорович Золотов ĕççынисем хăйсен ашшĕне, тусне тата учителне, халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа чикĕсĕр йуратни çинчен хумханса çĕр çеç мар, пĕтĕм чĕререн каласа панă. Вĕсем Сталински районĕнчи пĕтĕм суйлавçăсене декаберĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама пĕр çын пек хăрăс пыма, хăйсен сасĕсене Сойуз Советне депутата суйламали кандидата Сталин йулташа тата Национальнăçсен Советне депутата суйламали кандидата тӳрĕ большевика Николай Александрович Булганина пама хĕрӳлĕ чĕннĕ.

Трибунă çине Национальнăçсен Советне депутата суйлама Мускав хула суйлав округĕнчен тăратнă кандидат РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Н. А. Булганин тухсан, митингри халăх ăна питĕ хытă алă çупса йышăннă. Унăн сăмахне пысăк тимлĕхпе итленĕ тата темиçе хутах алă çупса чара-чара лартнă.

Мускав большевикĕсен руководителĕ ПСК(б) Партии Мускав Комитечĕн секретарĕ Н. С. Хрушчов йулташ сăмах тухса калани митингри мĕн пур халăха пысăккăн çĕклентернĕ. Сталински районĕнчи суйлавçăсем Хрушчов йулташ сăмахне çирĕп тимлĕхпе итленĕ. Хрушчов йулташ Сталин йачĕпе „урра" кăшкăрни çумне вуншар пин сасă хушăнса кăшкăрнă.

Митингри халăх пысăк хавхаланупа ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали пĕрремĕш кандидат Иосиф Виссарионович Сталин патне çыру йама йышăннă. (ТАСС).

Китайри вăрçă

Шанхай фронтĕнчи Китай çарĕсем йăвăр çухатусем туса, йапонцăсем Уси станцин районĕнче Шанхай-Нанкин чукунçулĕ тăрăх пыраççине чарса лартнă. Усирен хĕвелтухăçнелерех тата кăнтăр хĕвелтухăçнелерех хайар çапăçусем пыраççĕ.

Йанцзы йуханшывĕ çинче вырнаçнă çар карапĕсем çинчен тупăсемпе персе тăнипе тата авиаци пулăшнипе Йапони çарĕсем Цзйанин хули çине тапăнма тытăннă. Цзйанин районĕнче Йанцзы йуханшывĕ çинче чи пысăк Китай форчĕ пур. Вăл форт Йапони флоче Шан-хайран Нанкина йуханшыва хирĕç тăвала пырассине чарса тăрать.

Шанхай фрончĕн кăнтăрти участкинче йапонцăсем виçĕ колоннăпа тапăнаççĕ. Пĕр колонни Шанхай—Нанкин чукунçулĕ районĕнче, Нанкина хĕвеланăç йенчен сыхлакан Китай çарĕсем тавра çавăрăнса пыраканскер, Тайху кӳллин кăнтăр йенĕ тăрăх малала пырать. Нойаберĕн 23-мĕшĕнче ку колоннă Хучжоу хулинчĕн 25 километрта тăнă.

Йапонцăсем Гуандупа Гуанси кăнтăр Китай провинцисене çĕмĕрме вăйлăн хатĕрленеççĕ. Кăнтăр Китай шывĕсем çине Йапони карапĕсем пĕрмайах пыраççĕ.

Нойаберĕн 24-мĕшĕнче Йапони самольочĕсем Кантон тата Хенань утравĕ (Кантон çывăхĕнче) икĕ хут бомбăсем пăрахнă. Йăвăр бомбăсем пăрахса нумай çĕмĕрсе тăкнă. Хулара çĕр ытла çын вилнĕ. (ТАСС).

Ташкентри çĕр пин çынлă митинг

Нойаберĕн 24-мĕшĕнче Ташкентра Ташкент—Ленински суйлав округĕнчи суйлавçăсен çĕр пин çынлă митингĕ пулса иртнĕ. Митингра сăмах тухса калакансем Узбек ССРĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Сигизбайев, Каганович йачĕпе тăракан заводри паровозо-сборочнăй цех бригадирĕ Тарасов йулташ, Ташсельмашăн Ворошилов йачĕпе тăракан заводăн инженерĕ Колесова йулташ т. ыт. те Ташкент—Ленински суйлав округĕнчи суйлавçăсене хăйсен сасĕсене Сойуз Советне депутата суйламали кандидатшăн, Сталинла Халăх Комиссарĕ—Лазар Моисейевич Кагановичшăн тата Национальнăçсен Советне депутата суйламали кандидат—йатлă машинис-кривоносец Василий Йаковлевич Йемцовшăн пĕр кăмăллăн пама чĕннĕ.

Национальнăçсен Советне депутата суйламали кандидат Василий Йаковлевич Йемцов хĕрӳлĕ сăмах тухса калană.

Митинг тăвăллăн алă çупса халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин патне тата Сойуз Советне депутата суйламали хăйĕн кандидачĕ патне саламлă çыру йама йышăннă. (ТАСС).

Мускаври суйлав умĕнхи митингсенче

Нойаберĕн 24-мĕшĕнче, Мускавра Сталински, Пролетарски, Ленински, Октаберски, Советски тата Ростовски суйлав округĕсенчи суйлавçăсен нумай çынлă митингĕсем пулса иртнĕ. Сталински суйлав округĕнче икĕ митинг—Сталински тата Бауманский районсенче пулнă. Вăл митингсенче 150 пин ытла çын пулнă.

Столицăри суйлав округĕсенче вăл кун пулнă тата пысăк çĕкленӳпе иртнĕ суйлав умĕнхи митингсенче 700 пине йахăн суйлавçă пулнă. (ТАСС).

Дагестанăн халăх поечĕ Сулейман Стальски вилнĕ

Нойаберĕн 23-мĕшĕнче, ирхине, хăйĕн тăван аулĕнче—Амага-Сталь аул, Касум-Кент районĕ, Дагестан АССР—Дагестан халăхĕн аслă поечĕ, Дагестанри Совет писателĕсен сойузĕн председателĕ орденоносец Сулейман Стальски вилнĕ.

Сулейман Стальски, йăвăр чире пула вăйĕ пĕтнĕ пулин те, хăйĕн йулашки кунĕччĕнех çĕршывăн пурнăçĕпе пит интересленнĕ, ĕçлесшĕн çуннă. Вăл ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленесси çĕршывра сарăлса пынине тимлĕн сăнаса тăнă.

Сулейман Стальски хăйĕн чи лайăх йуррисене ĕçхалăхĕн аслă çулпуçĕсем—Ленин тата Сталин çинчен, большевиксен партийĕ çинчен, партипе правителствă руководителĕсем çинчен тата никам çĕнтерейми йуратнă Хĕрлĕ çар çинчен çырнă.

Сулейман Стальски хăйĕн çивĕч те хăватлă сăввисемпе партин тата халăхăн тăшманĕсене хирĕç—ылханлă троцкисла-фашисла çынвĕлерекенсене, шпионсемпе диверсантсене хирĕç, кулаксемпе муллăсене хирĕç кĕрешнĕ.

Дагестан халăх поетне—Сулейман Стальскине ĕççыннисем пурте йуратнă. ССР Сойузĕн правителстви Сулейман Стальскине чи пысăк наградăпа—Ленин орденĕпе наградăланă. Халăх ун çине чи пысăк шанчăк хунă—ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата палăртнă.

Сулейман Стальски вилни çинчен пĕлтерекен хуйхăлă хыпар часах пĕтĕм Дагестан тăрăх сарăлнă. Предприйатисенче, аулсенче хуйхăлă митингсем пулса иртнĕ.

Халахăн Аслă поечĕ вилни—пĕтĕм ĕççыннисен хуйхи пулса тăрать, тесе шутлаççĕ ĕççыннисем. (ТАСС)

СОВЕТ СОЙУЗĔ ТĂРĂХ

★ ПĔТĔМ СОЙУЗĔПЕ 211 МĔЛЙУН ЦЕНТНЕР САХĂР КĂШМАНĔ ПУХНĂ. Сойузри колхозсемпе совхозсем кăçал 211 мĕлйун центнере йахăн сахăр кăшманĕ пухса илнĕ. Иртнĕ çулхипе танлаштарсан 43 мĕлйун центнер ытларах.

★ ПĔР ĔНЕ 3.700 ЛИТР СĔТ ПАНĂ. Рйазань облăçĕнчи Скепински районри „Красный горняк" колхоз ĕнисем çултalăкра 3.700-шер литр сĕт панă. Вăл ĕнесене паллă дойаркă А. М. Нуждова пăхса усрать.

Францири фашиссен заговорĕ

ПАРИЖ, 24-XI (ТАСС). Францири фашиссен заговорĕ пирки ĕçе йĕрлессине малала туса пыраççĕ. Париж çывăхĕнче, пуйан фабрикант фашис Коти çуртĕнче, вăрттăн туса лартнă сооруженисем тупнă. Унта центральнăй телефон станци тата çĕр айĕнче тунă хĕçпăшал склачĕ пулнă.

Нойаберĕн 23-мĕшĕнче шалти ĕçсен министерстви фашиссен заговорĕ çинчен официаллă пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳре çапла каланă: политикăла полици фашиссене вăрçă хатĕрĕсем, пуринчен ытла йутçĕршывсенчен кӳрсе килнĕскерсене, чылай туртса илнĕ—пăшалсем, пулеметсем, винтовкăсем, çăмăл пулеметсем, гранатăсем, сиктерсе йаракан йапаласем, т. ыт. те. Парижре, тинĕс тата йуханшыв транспорчĕн ссудă кассинче обыск тусан, çар майлă йĕркеленнĕ вăрттăн организаци пуррине палăртнă. Çав организацин хăйĕн тĕп-штабĕ тата санитари службиé пулнă. Организацин кадрĕсене дивизисем, бригадăсем, полксем, батальонсем тăрăх уйарнă; çакăнтан ĕнтĕ çав организаци хăй умне—фашисла диктатурă туса хума граждăн вăрçи тăвас задачă лартни курăнса тăрать.

Ухтарнă чухне суйа документсем тумали материалсене, хĕçпăшал туртаракансене панă инструкцисене, полицин ăçта мĕн чухлĕ вăй пурри çинчен справкăсене, Францин чи паха облăçĕсенче çар вăйĕсем мĕн чухлĕ пурри çинчен справкăсене, сигнал парсанах тытса хумали министрсемпе политикăла деятелсен спискĕсене, хĕçпăшалсене тытса илмели плансене т. ыт. те тупнă. (ТАСС).

Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидатсем суйлавçăсем патĕнче

М. М. Сахйанова йулташ суйлавçăсем патĕнче

КУКЕÇ. Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче лозунгсемпе, плакатсемпе, Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсен сăнĕсемпе иломлетнĕ соцкуљтурă çуртне колхозсен, предприйатисен, профсойузсемпе обществăлă организацисен представителĕсем, пĕтĕмпе 500 çынна йахăн, районри суйлав умĕнхи пухăва пухăннă. Суйлавçăсем Шупашкар йал суйлав округĕ тăрăх Национаљнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă Парти Тĕпкомĕн Партилĕ Контрољ Комиссин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Марийа Михайловна Сахйанова йулташпа тĕл пулса калаçрĕç. Çавăнпа пĕрлех вĕсем Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсем çинчен: З. А. Андрейевапа В. П. Чкалов йулташсем çинчен сӳтсе йаврĕç.

Кушкăри „Осоавиахим" колхозĕнчен суйласа йанă представител Федоров йулташ çапла каларĕ:

„Аслă Совета, халăх тăшманĕсемпе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешсе пыракан, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен çынсене суйламала. Пирĕн Сахйанова йулташ ку ĕçсене туса пырать те ĕнтĕ. Чăваш республикинче ку таранченех хĕсĕнсе пурăннă халăх тăшманĕсене, буржуалă националиссене тымарĕпех каклас тĕлĕшпе Сахйанова йулташ сахал мар ĕçлерĕ. Вăл пирĕн телейлĕ пурнăçшăн тăрăшать. Çавăнпа епĕр ăна Национаљнăçсен Советне депутата суйлама кандидата тăратрăмăр. Епĕр унпа сасăлатпăр".

Пухура Сахйанова йулташ сăмах тухса каларĕ. Сахйанова йулташ хăйне Шупашкар йал суйлав округĕнчен Национаљнăçсен Советне депутата суйлама палăртса ун çине пысăк шанчăк хунишĕн районри ĕççыннисене пĕтĕм чĕререн тав тăвать.

— Ĕççыннисем,—тет вăл,—пур ĕçре те телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса паракан коммунисла партипе унăн çулпуçне—Сталин йулташа йуратаççĕ. Епĕ коммунисла парти членĕ пулса тăратăп. Пире ĕççыннисем шанаççĕ. Пирĕн ку шанчăка ĕçре кăтартмала. Епĕ çакна калатăп: епĕ ку таринччен Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешнĕ, малашне те Ленинпа Сталин парти ĕçĕшĕн, халăх тăшманĕсемпе хайаррăн кĕрешсе пыма сăмах паратăп.

Сахйанова йулташ хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ.

— Май пурнăçран çакна курма пулать: пусмăр айĕнче пурăнакан вак халăхсем, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, телейлĕ пурнăçшăн, коммунисăм тăвассишĕн патша влаçне хирĕç сахал мар кĕрешнĕ. Мана Ленинградри пролетариат çитĕнтерчĕ. Епĕ Ленинпа Сталина темиçе хут та курнă. Чи малтан епĕ Ленина 1917 çулта апрелĕн 4-мĕшĕнче, йут патшалăхран килнĕ хыççăн, Финљандски вокзалра курнă. Митингсенче ун сăмахĕсене темиçе хут та итленĕ. ПСК(б)П 1917 çулти апрељри конференцинче Ленинпа Сталин оппортуниссемпе кĕрешнине лайăх астăватăп. Ку маншăн пысăк шкул пулнă. Халăх тăшманĕсемпе кĕрешме Ленинпа Сталин вĕрентнĕ мана, епĕ халĕ ку паха ĕçе туса пыратăп.

— Епĕ Сахйанова йулташа чи малтан ПСК(б)Партин Облăçри конференцинче курнă. Вăл ун чухнех Петров, Никитин, Токсинсене хытă критиклерĕ. Вăл Чăваш республикине халăх тăшманĕсенчен тасатас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет, парти Тĕпкомĕ шаннине пурнăçа кĕрет. Епĕ Сахйанова йулташшăн сасă пама чĕпетĕп, хам та унщăн сасăлатăп,—тет Аљкешри Ирина Антонова йулташ.

Трибунă çинче „Красный флот" колхозри колхозницă Филиппова йулташ.

— Епĕр ĕнер колхозра суйлавçăсен пухуне туса иртертĕмĕр. Колхозниксем пĕр сасăпах Сахйановашăн, Андрейевашăн, Чкаловшăн сасăлама пулчĕç. Епĕр вĕсене государствăн ĕçне йертсе пыма шанатпăр. Ĕлĕкхи вăхăтра пире, хĕрарăмсене, тĕттĕмре усранă, пире государствă ĕçĕнче ĕçлеме мар, сасă та паман. Халĕ арçынпа хĕрарăм пĕр тан. Унтан та ытларах, хĕрарăмсем ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Андрейева йулташ—Чăваш Тĕпĕçтăвком председателĕ, Сахйанова йулташ—Парти Тĕпкомĕн Партилĕ Контрољ Комиссин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ. Вĕсем иккĕшĕ те пирĕн пек çынах, патша вăхăтĕнче пусмăр айĕнче пурăннă чухăнсем. Вĕсене Ленинпа Сталин партийĕ çитĕнтерчĕ. Епĕ хам та ĕлĕкхи вăхăтра улпут патĕнче ĕçлесе пуша курнă çын. Халĕ епĕр 50 пин тенкĕ тăракан клуб туса лартрăмăр. Пур ĕçсене те машинпа тăватпăр. Спасибă пире телейлĕ пурнăç туса паракан Сталин йулташа.

— Епĕ ĕлĕк вулăçри старшинасене суйланине астăватăп,—тет Пысăк Пӳкассинчи колхозник Федоров йулташ.—Анчах унта пире сывăхне те йаман. Унта кулаксем çеç пулма пултарнă. Пупсемпе кулаксем—пуйансене суйланă. Вĕсем вара пирĕн пек чухăн çынсен йупĕçене ĕçсе пурăннă.

Пухура Сахйанова, Андрейева, Чкалов йулташсен кандидачĕсемшĕн Г. Йегоров (Вачалкасси колхозĕнчен), Данилов (Милӳтинри вăрман заводĕнчен), Капитонов (Лапсар колхозĕнчен), Антонов (Молотов йачĕпе тăракан колхозран), Мойсейев (Шорчакасса колхозĕнчен) тата ыт. тухса каларĕç.

Пуху Шупашкар йал суйлав округĕнчи суйлавçăсем патне çыру йама йышăнчĕ.

Çырура çапла каланă:

— Епĕр, колхозсен, предприйатисен, профсойузсемпе обществăла организацисен представителĕсем — В. П. Чкалов, М. М. Сахйанова, З. А. Андрейева йулташсем пирĕн суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшнĕшĕн хĕпĕртесе савăнатпăр. Епĕр суйлав кунне пурте пĕр çын пек суйлав участкисене пырса **Чкалов, Сахйанова, Андрейева** йулташсемшĕн хамăр сасăсене паратпăр. Шупашкар йал суйлав округĕнчи суйлавçăсене пурне те Чкалов, Сахйанова, Андрейева йулташсемшĕн сасăлама чĕнетпĕр.

Пуху рабочисене, колхозниксене тата районри пĕтĕм ĕççыннисене, суйлав кунне государствă умĕнчи парăмсене парса татнипе, 1938 çулхи çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илме чĕнчĕ.

П. Перлов.

Суйлав умĕнхи районри канашлу

Пухура Национаљнăçсен Советне депутата суйлама палăртнă кандидат— ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвком секретарĕ А. Ф. Горкин йулташ сăмах тухса каларĕ

Сталин йулташ патне йанă çыру

Пирĕн хаклă çулпуç, учител тата тус Сталин йулташ! Хаклă Иосиф Виссарионович!

Епĕр, Чăваш АСС Республикинчи Канаш районĕнчи вăтăр пин суйлавçăсен представителĕсем, партири тата партире тăман бољшевиксем Канашри вагонсем йусакан завод рабочийĕсем, служащийĕсем, инженерла-техникăла работникĕсем, Канаш станцинче ĕçлекенсем, колхозниксем, ĕççыннисен тата совет çĕр интеллигенцийĕн представителĕсем, районри суйлав умĕнхи канашлура пуханса, сана, етемлĕхĕн аслă генине, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçне, учителĕ, тусне, Ленин ĕçне аслă пурнăçа кĕртсе пыракана, тĕнчери чи демократиллĕ Конституци тăвакана хамăрăн хĕрӳллĕ салама йаратпăр.

Октябĕр Социализмлă революцийĕн тата ССР Союзĕнче социализм çĕнтерӳ́ĕсене организацилекенĕм Ленин—Сталинăн аслă партине, ССР Союзĕн Конституцине тăвакан тăван аттене, ССР Союзĕнчи халăхсен аслă çулпуçне—Иосиф Виссарионович Сталина вĕçсемсĕр йуратса парăнни çинчен хамăрăн йуратулă пĕрремĕш сăмаха калатпăр епĕр.

Бољшевикла партине, сана, Сталин йулташ, вĕçĕ-хĕррисĕр йуратса, епĕр ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли куна хатĕрленсе пыратпăр. Епĕр хамăрăн сасăмăрсене Ленин—Сталинăн никам çĕнтерейми аслă ялавне чысла çĕклесе пыракансемшĕн, Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн, коммунизм ĕçĕшĕн чунтан-чĕререн тăрăшса кĕрешекенсемшĕн паратпăр. Сана, Сталин йулташа, епĕр бољшевиксен Пĕтĕмсоюзлă Коммунисла Парти тавра тата çирĕпрех пĕтĕçтерĕр тесе, троцкиссене, зиновьевсемпе, бухаринсемпе, буржуалла националиссемпе, пĕтĕм тĕнчери фашисмăн шпионла агентурипе пĕр хĕрхенӳсĕр кĕрешсе халăхăн мĕн пур тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкатпăр, тесе шантаратпăр.

* * *

КАНАШ (хамăр корр.). Нойабĕрĕн 24-мĕшĕнче Канаш районĕнчи суйлав умĕнхи пуху пулчĕ. Пухăва 500 çын ытла пычĕ. Пухура Канаш суйлав округĕ № 500 тăрăх Национаљнăçсен Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат—ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвком секретарĕ А. Ф. Горкин йулташ пулчĕ. Пуху пит те пысăк хавасланса иртрĕ.

Аслă Совета депутата суйлама палăртнă кандидат А. Ф. Горкин йулташ Канашри вагонсем йусакан заводри, тата чукунçул станцийĕн рабочисене, служащийĕсене, инженерла-техникăла рабочисене, „Красное пламя", „Мотор", „Красная Чувашия" колхозсенчи тата Молотов йачĕпе тăракан колхозри колхозниксене, Аслă Совета депутата суйлама унăн кандидатурине тăратса, унпа çине пысăк шанчăк хунăшăн тав турĕ. А. Ф. Горкин йулташ хăйĕн кĕрешӳсемпе пуйан автобиографине тĕплĕн каласа пачĕ.

—Есĕр мана шанăç панине епĕ халăх малашнехи ĕçре кăтартăп. Малашне те епĕ Ленин—Сталин партин ĕçне пĕтĕм вăй-хала хурса туса пырăп,—тет Горкин йулташ.

А. Ф. Горкин йулташ пурне те кăмăла каймала сăмах каларĕ. Вăл калани чухне темиçе хутчен те алă çупрĕç. Горкин йулташăн:

—Мана парти ӳстерчĕ. Епĕ йалан халăх интересĕсемшĕн пурăнма тăрăшнă, малашне те тăрăшăп, тет—сăмахсем суйлавçăсем тăвăллăн алă çупнипе илтми пулаççĕ.

Горкин йулташ хăйĕн сăмахне çак сăмахсемпе пĕтерет:

—Аслă Сталин сывлăхĕшĕн!

—Союз Совечĕн пур халăхсен пĕрлĕхĕшĕн!

—Сывă пултăр Аслă Сталин! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Пухура Федоров („Мотор" колхоз), Михайлов (граждан вăрçинче „пулимĕскер"), Союз Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Цыганова, Васильева, (Канашри вагонсем йусакан заводран), Черпанов (колхозник), Порфирьев (Çĕнĕ Шелтемĕри колхоз бригадирĕ), Антонов (Мăкăр колхозĕ), Епифанов (Канаш станцийĕ), Алексейев (Молотов йачĕпе тăракан колхоз) йулташсем тухса каларĕç.

Канашри вагонсем йусакан заводри рабочи Пахайин йулташ çĕнĕ тăрăх, пухăва тăвăллăн алă çупса Конституци тăвакан аслă Сталин патне çыру йама йышăнчĕ.

Пуху пĕтнĕ хыççăн культурă çурчĕ пысăк митинг пулса иртрĕ. Митингра Горкина Цыганова йулташсем сăмах тухса каларĕç.

„Канаш" колхозри колхозник Константинов йулташ, Канаш станцинче ĕçлекен Шпонин йулташ колхозниксен, рабочисен, инженерла-техникăла работникĕсен йачĕпе Чкалова, Горкина тата Цыганова саламларĕç.

Унтан митинг Канаш районĕнчи мĕн пур суйлавçăсем патне чĕнӳ йачĕ.

Цыганова йулташ сăмахĕ

Йулташсем! Колхозниксем, колхозницăсем, рабочисем, работницăсем, инженерсем, килхуçи арăмĕсем, Канаш районĕнчи пур ĕççыннисем! Есĕр мана ССР Союзĕн Аслă Советне депутата суйлама кандидата тăратса, мана шаннишĕн епĕ пĕтĕм кăмăлтан сире тав тăватăп.

Аслă Совета депутата суйлама кандидата тăратни—йепле пысăк савăнăç, хисеп!

Манăн каллех хĕрарăмсене Сталинла Конституци мĕнле пысăк правасем пани çинчен калас килет.

Совет çĕршывĕнче çеç хĕрарăмсем пур йенчен те арçынсемпе пĕр танах правалă, государствă тытăмĕнче ĕçлеме активлă хутшăнаççĕ. Пирĕн хĕрарăмсенчен халĕ епĕр инженерта, љотчикра, тухтăрта ĕçленине, партипе совет организацисенче активлăн ĕçленине куратпăр.

Акă, тĕслĕхрен Чăваш республикинех илер. Пирĕн Тĕпĕçтăвком председателĕнче Зойа Ананйевна Андрейева ĕçлет. Хуçалăхпа културă строителствине хĕрарăмсем мĕнле активлă ĕçлени çинчен кăтартакан тĕслĕхсем çĕршерĕн аса илме пулать.

Епĕ Совет влаçĕнче ӳссе çитĕннĕ. Манăн чăн-чăн пурнăç Куславкка комбинатĕнче пуçланать. Кунта епĕ вĕреннĕ, çитĕннĕ. Малтан епĕ черноработницă пулнă. 1935 çулта епĕ сменă мастăрĕ йатне илме пултартăм. Манăн сменă заводра йалан малта пынă, пырать те.

Куславкка районĕнчи ĕççыннисем мана райĕçтăвком членне суйланă, республикăри сйессене делегата суйласа йанă. Епĕ йаланах хамăр çĕршывшăн тăрăшса ĕçленĕ.

Есĕр мана шаннине епĕ ĕçре кăтартатăп. Ленин—Сталин парти ĕçне хамăн мĕн пур вăй-хала, ăс-тăна, кирлĕ пулсан пурнăçа та пама сăмах паратăп. Сывă пултăр Коммуниссен партийĕ. Сывă пултăр аслă Сталин! **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Васильева йулташ сăмахĕ

(Канашри вагонсем йусакан заводри работницă)

Йулташсем! Канашри вагонсем йусакан заводри механически цехри рабочисен, служащисен, инженерсен коллективĕнчен пирĕн хаклă кандидатсене—ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвком секретарне А. Ф. Горкин йулташа, Куславкка комбинатĕнчи стахановкăна Е. П. Цыганова йулташа хĕрӳлĕн саламлатăп.

Йулташсем! Ĕлĕк хĕрарăмсене пусмăрта усранă. Йăвăрçын пулсан отпуск паман, ăçта лекнĕ унта—тепĕр чухне уйрах ача тума лекнĕ. Халĕ совет правителстви хĕрарăмсемпĕн пумай тăрăшать. Пирĕн заводсенче, колхозсенче ачасен сачĕсем, йаслĕсем, ача çуратмалли пӳлĕмсем пур.

Совет хĕрарăмĕсем патшалăх управленинче активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Çак кунсенче, тăван çĕршывăн савăнăçпа, кăмăлпа тулнă кунсенче, епĕр хĕрарăмсем, хĕрарăмсемшĕн тăрăшакан йуратнă Сталин йулташа саламлатпăр.

Суйлав кунĕ çывхарсах килет. Вăл кун совет ĕççыннисем хăйсен сасăсене совет çĕршывĕн интересĕсемшĕн тăрăшакан çынсемшĕн параççĕ.

Епĕ çак трибунă çинчен Канаш суйлав округне кĕрекен мĕн пур суйлавçăсене пирĕн йуратнă тивĕçлĕ кандидатсемшĕн Чкалов, Горкин, Цыганова йулташсемшĕн сасăлама чĕнетĕп. **(Алă çупаççĕ.)**

И. А. Алексейев йулташ сăмахĕ

(Молотов йачĕпе тăракан колхоз членĕ)

Йулташсем! Епĕ Сухайкассипе Пикших колхозĕсенчи колхозниксенчен Аслă Совета депутата суйлама кандидата тăратнă Чкалов, Горкин, Цыганова йулташсене салам калатăп.

Пирĕн çĕршыв татах та пысăкрах çĕнтерӳсем тума пултартăр тесен, пирĕн Аслă Совета коммуниссен парти ĕçĕшĕн мĕн пур вăйхалпа тăрăшакан çынсене çеç суйламала.

Илер-ха, пирĕн Александр Федорович Горкин йулташа! Унăн пурнăçĕ Ленин—Сталин партийĕн кĕрешӳвĕпе тачăн çыхăнса тăрать. Вăл пирĕн парти йертсе пынипе тăван çĕршыва сутакансене, Йапонипе Германи фашисăмĕн йыттисене—троцкиссене, зиновйевцăсене, бухаринцăсене хирĕç хайаррăн кĕрешнĕ. Совет халăхĕшĕн чĕререн йуратса, пĕтĕм вăй-халран тăрăшса ĕçленине Чкаловпа Цыганова та пит те лайăх кăтартнă.

Сухайкассипе Пикших колхозĕсенчи колхозниксенчен епĕ Канашри суйлав округне кĕрекен пур суйлавçăсене те Горкин, Чкалов, Цыганова йулташсемшĕн сасăлама чĕнетĕп. **(Алă çупаççĕ).**

Сывă пулччăр Аслă Совета суйламалли пирĕн кандидатсем Горкин, Чкалов, Цыганова йулташсем!

Сывă пултăр пирĕн атте, учител тата тус Сталин йулташ! **(Алă çупаççĕ).**

Киле пырса ăнлантараççĕ

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). Хыркассинчи туллимар вăтам шкулта 6—7-ш классенче вĕренекен 40 ача Сталинла Конституципе „ССР Союзĕн Аслă Советне суйламалли Положенине" вĕренмели кружокран вĕренсе тухрĕç. Халĕ вĕсем йалсенче кружока çӳреме пултараймав килхуçи хĕрарамĕсемпе алăри ача амăшĕсене суйлав саккунне вĕрентме тытăнчĕç.

Суйлав кунĕнче ача йаçли уçаççĕ

ЙЕТĔРНЕ. Тури Ачакри „Крестьянская газета" йачĕпе тăракан колхоз Аслă Совета суйламалли куна—декабĕрĕн 12-мĕшне чĕре тулли хаваслăхпа кĕтсе илет. Колхозниксем çĕнĕ суйлав саккуне тимлесе вĕренеççĕ, сасăламали техникăпа паллашаççĕ. Пĕчĕк ачасен амăшĕсене суйлава кайма ан чăрмантăр тесе, колхоз декабĕрĕн 12-мĕшĕнче ача йаçли уçать.

П. Здорнов.

Суйлавсем ĕлĕк мĕнле иртнĕ*)

Совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем пурте—арçынсем те хĕрарăмсем те, ват исем те çамрăксем те—ССР Союзĕн Аслă Советне суйлама чи пысăк праçнике хатĕрленнĕ пек хатĕрленеççĕ. Суйлава пурте хутшăнма пултарччăр тесе, суйлава ĕçлемен кун иртермеле тунă.

Суйлавçăсем Аслă Совета пурне те тивĕç, пĕр тан тата тӳрех суйламала правапа вăрттăн сасăласа суйлаççĕ. ССР Союзĕн 18 çул тултарнă граждăнĕсем пурте,—мĕнле расăпа национаљнăç пулнине, мĕнле тĕн тытнине, мĕн чухлĕ вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле социаллă сийрен тухнине, пурлăхĕ мĕнлине тата ĕлĕк мĕн ĕçпе пурăннине пăхмасăр,—ăсран тухнисемсĕр тата судпа айăпланса суйлав прависĕр хăварнă çынсемсĕр пуçне,—пурин те депутатсен суйлавне хутшăнма та суйланма та права пур.

Капиталисăмлă çĕршывсенче, чи „демократилĕ" текеннисенче те, ĕççыннисен çавăн пек права çук. Сăмахран, Францире хĕрарăмсен, çар çыннисен, пĕр вырăнта ултă уйăхран кайа пурнăкансен суйлав прави çук.

Ĕлĕк, патша саманинче, Российăра та рабочисемпе хресченсĕм халљхи пек правасене пĕлмен, правасăр пулнă вĕсем. 1905 çулта революцилĕ вăйсем çĕнтересрен хăраса ӳксе, царисăм буржуазийе хăшпĕр уступкăсем парать, помещиксемпе буржуйсен парламентне—Государствă думине туса хурать. Самодержави рабочисене суйлав прави парам пекки тăвать, анчах вăл çав хĕсĕк те мĕскĕн суйлав правине те тĕрлĕ майсемпе хĕснĕ.

Думă рабочисемпе ĕçхресченĕсемшĕн пулман. Унта пуринчен ытла помещиксем тата шултра фабрикантсем ларнă.

I-мĕш Государствă думи пухăннă вăхăтра (1905 ç. вĕçĕ—1906 ç. пуçламĕшĕ) рабочи клас, бољшевикла парти йертсе пынипе, урамсенче тата баррикадăсенче патша стройне хирĕç кĕрешнĕ, хĕçпăшаллă восстанийе хатĕрленсе туса пынă. Бољшевиксем I-мĕш Думă суйлавне бойкот тунă. Бойкот тăвасси çакăнтан килнĕ: револљуци çĕкленнĕ тапхăрта Думă суйлавне хутшăнни рабочисене револљуцилĕ кĕрешĕврен, хĕçпăшаллă восстанирен пăрса йама кăна пултарать, тесе шутланă бољшевиксем.

II-мĕш, унтан тата III-мĕш Думăна суйланă вăхăтра (1906 çул тата 1907 ç. çулла) самана урăхла пулнă. Çĕршывра реакци пуçланса кайнă, револљуци хумĕ чакса пынă. Патша правителстви, буржуази пайнă пулăшупа усă курса, рабочи организацийĕсене çапа-çапа çĕмĕрнĕ, малта пыракан револљуцилĕ рабочисене пинĕ-пинĕпе пересе вĕлернĕ тата катăргăна йанă. Йалсенче карателнăй отрйадсем асса çӳренĕ. Çав условисенче бољшевикла парти, хăйĕн вăрттăн ĕçлекен организацийĕсене тĕреклетме, усçăн (легаљнă) ĕçлемели майсемпе пуринпе те усă курма кирлĕ, çаплах вара патша стройне тăрă шыв çине кăларса пымала, массăсене çĕнĕ çапăçăва организацилемеле, тесе шутланă. Думă трибуни çавăн пек уççăн ĕçлеме май паракан пулнă.

Меншевиксем патша Думине парламент тесе шутланă, вĕсем Думăна буржуазипе пĕрле саккунсем кăларма кайнă. Бољшевиксем, йăлтах урăхла, Думă трибунипе пуçпулса тăракан классен политикине тăрă шыв çине кăларма усă курмала, тесе каланă.

Государствă Думине суйламали кампани бољшевиксемшĕн револљуцилĕ агитацийе мĕн чухлĕ те пулин анлăнрах сарса йамали, рабочисене организацилемели çулйĕрсенчен пĕри пулса тăнă. Социал-демократилĕ фракция Думăри тата ун тулашĕнчи ĕçе револљуцилĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Анчах суйлав кампанийĕпе усă курасси те унран кайа пулман.

IV-мĕш Думă суйлавĕнче пурнăçа кĕртмели бољшевикла платформă çак лозунгсенчен тăнă: 1) демократилĕ республикă; 2) 8 сехетлĕ ĕç кунĕ; 3) помещиксен пĕтĕм çĕрне конфискацилесси. Бољшевикла партин çав виçĕ тĕп лозунгĕ Российăри пролетариатпа хресченсен тĕп требованисене йар уççăн палăртса тăнă. Пĕрле илсен вĕсем самодержавийе сирпĕтсе антарассишĕн кĕрешессине, пролетариатпа хресченсен револљуцилĕ-демократилĕ диктатури çĕнтерессине пĕлтернĕ.

Патша правителстви кăларнă суйлав саккунĕ çапла пулнă: вăл Думăра помещиксене, дворйансене тата буржуйсене чи пысăк вырăн йышăнма май панă Суйлавсем нумай сыпăклă пулнă. Халăхăн тĕрлĕ ушкăнĕсем: помещиксем, шултра собственниксем, хресченсем т. ыт. выборщиксене суйланă, выборщиксем вара депутатсене суйланă. Рабочисемшĕн суйлав системи тата та кăткăсрах пулнă: вĕсем малтан уполномоченнăйсене суйланă, уполномоченнăйсем выборщиксене суйланă, выборщиксем кăна ентĕ кĕпĕрнери суйлав пухувĕнче пулма пултарнă. Рабочисем пĕтĕм Российĕпе те ултă кĕпĕрнере кăна хăйсен хушшинчен пĕрер депутат суйлама пултарнă.

Анчах çавăн пек хĕсĕк правапа пур рабочисем те усă курма пултарайман. Пĕр заводра йе фабрикре ултă уйăхран кайа мар тапти-сыпписĕр ĕçленĕ рабочи кăна уполномоченнăй суйлас ĕçе хутшăнма пултарнă. Çакă вăл кирлĕ кандидатсене хатĕрлес ĕçре пысăк йăвăрлăхсем кăларса тăратнă. Рабочисем палăртнă кандидата администраци кирек хăш вăхăтра та ĕçрен кăларса йама пултарнă.

Вăл вăхăтра вăрттăн ĕçленĕ бољшевикла партишĕн йăвăрлăхсем раснах пысăк пулнă. Çав йăвăрлăхсене пăхса тăмасăр бољшевиксем ĕçе вăйлăн сарса йанă, рабочи курисенче пуринче те бољшевикла парти çĕнтернĕ. Çулте асăннă ултă кĕпĕрнери депутата бољшевиксене суйланă.

Суйлав кампанине бољшевиксем Тĕп Комитет тата В. И. Ленин хăй йертсе пынипе иртернĕ. Суйлава тӳрремĕн йертсе пыма партин Петербург комитечĕ Тĕп суйлав комиссийе уйăрнă.

1912 çулта Сталин йулташ Нарым ссылкинчен тарса Петербурга пынă. Вăл бољшевикла партин суйлав кĕрешĕвне йертсе пырас ĕçе хăй çине илнĕ. „Правда" редакци бољшевиксен суйлав кампанийĕн чăн центрĕпе штабĕ пулнă. Бољшевикла „Правда" пуçĕнче Сталин йулташ тăнă. Патша саккунĕ рабочисене суйлав умĕнхи пухусем пухма ирĕк паман. Çавăн пек условисенче „Правда" агитацийĕ уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Редакци çурчĕ районсен тата уйрăм фабриксемпе заводсен представителĕсен пĕр-пĕринпе тĕл пулмали тата пухусем иртермели вырăн пулнă.

Çавăнпа пĕрлех районсенче суйлав умĕнхи вăрттăн пухусем пуçланнă. Полици ан систĕр тесе, йышлă пуху пухман, пухăва 10—20 çынран мала чĕнмен. Уçăлса çӳреме тухас сăлтавпа рабочисем пĕчĕкшер ушкăнпа хула çывăхĕнчи вăрмана кайнă. Вăрманта полици шпикĕсенчен вĕçерĕнме çăмăлтарах пулнă. Вăрмана шала кĕме сышчиксем те хăранă.

Патша правителстви рабочисен хушшинче суйлав кампанине иртерме пур тĕрлĕ майсемпе чăрмантарнă. Петербургри чи пысăк заводсенчен пĕринче, Обухов заводĕнче, уполномоченнăйсене суйлассипулайман, мĕншĕн тесен суйлав иртерме палăртнă вăхăтра завод çурчĕсене пурне те питĕрсе илнĕ пулнă. Ижорск заводĕнче суйлав иртерме çурт пулнă, анчах çурта кĕме вăхăт мĕн пурĕ те 15 минут çеç панă. Çав 15 минут хушшинче кĕме ĕлкĕреймен рабочисене суйлав çуртне кĕртмен. Ытти чылай предприйатисенче рабочисене суйлавçăсен спискине кĕртмен. Рабочисем суйлав комиççине протес парсан, суйлав комиççи „тӳрлетме май çук, вăхăт иртнĕ", тесе ответ панă.

Суйлав пухувĕсене нимĕн вырăнне те хăварас мар тесе, хăшпĕр çĕрте уполномоченнăйа суйлама кандидата палăртнă çынсене тата револљуци шухăшла активлăрах рабочисене полици арестленĕ. Саккун тăрăх, пуху иртекен пӳлĕмре, йут çынсем, çав хисепрех завод администрацийе полици те, пулма пултарайман. Анчах завод тавра полицин вăйлă нарйачĕсем тăнă.

Анчах бољшевиксене нимĕнле чармав та кансĕрлеме пултарайман. Петербургран рабочи курии тăрăх 80 уполномоченнăй суйланă. Вĕсен хăйсен хушшинчен ултă выборщик суйламала пулнă. Петербург кĕпĕрни сйесĕнче çав ултă выборщикрен Думăна рабочи курирен пĕр депутат суйламала пулнă.

Пĕтĕм кĕпĕрнери уполномоченнăйсен сйесĕ пайан-ыран пуханас чух патша правителстви рабочисен суйлав правине татах хĕсме шутланă. Вăл „разйаснени" кăларнă. Октябĕрĕн 4-мĕшĕнче, суйлав сйесĕ умĕн, çав „разйаснени" тăрăх, 21 фабрикпа заводри рабочисене уполномоченнăйсен суйлавĕ чăн мар тесе пĕлтернĕ. Йулашкинчен, суйлав сйесĕнче, губернатăр васкавлăн панă распорйажени тăрăх, тата тепĕр сакăр предприйати тăрăх уполномоченнăйсен суйлавĕ чăн мар тесе пĕлтернĕ.

Правителствăн васкавлă „разйаснени" Петербургри рабочисене çав тери хытă тарăхтарса йанă. Питĕр рабочисем çавна хирĕç вăйлă протеспа ответленĕ. Чи малтан Путилов заводĕнчи рабочисем çĕкленсе тухнă. Вĕсем 1912 çулти октябĕрĕн 5-мĕшĕнче кăнтăрлахи апат хыççăн, ĕçе тытăнмасăр, забастовкă пуçласа йанă. Пĕтĕм завод — 14 пине йахăн рабочи бастовкă тунă. Путилов завочĕ хыççăн Невари карапсем тăвакан завод кайнă. Кунта 6500 рабочи митинг тата политикăла демонстраци организациленĕ. Ку заводсем çумне ытти чылай заводсемпе фабриксем хутшăннă. Забастовкăсем йăлтах политикăла забастовкăсем пулнă. 10 кун хушшинче забастовкă йухăмĕ 100 пин çынна йахăн çавăрса илнĕ.

Забастовкă хумĕ сарăлнă çемĕн сарăлса пынă. Правителствă, рабочи-суйлавçăсене ал айне илме çăмăл маррине кура, „разйаснени" панă предприйатисенче уполномоченнăйсен çĕнĕ суйлавне иртермеле тунă. Предприйатисен спискине унччен уполномоченнăйсен суйлавне хутшăнман чылай фабриксемпе заводсене кĕртнĕ. Ку рабочи класăн пысăк çĕнтерӳвĕ пулнă.

„Правда" тата бољшевикла парторганизацисем, малтанхи пекех, агитацийе ĕçе вăйлăн сарса йарас, рабочисене бољшевикла кандидат-

*) А. Йе. Бадайевăн „Как большевистские депутаты боролись в государственной думе" йатлă кĕнекинчен илсе çырнă.

Парти организацисен чи лайăх вăйĕсене суйлав участкисене йамала

Суйлава ăнăçлăн иртересси—суйлав участкисенче ĕçе тĕплĕн организациленинчен килет

Нĕркеç суйлава хатĕрленет

Каçхине 6 сехет çитсен, кашни кунах Нĕркеç çыннисем вунпилĕк килĕн пухăнаççĕ. Вĕсем патне агитаторсем килеççĕ те, вара суйлав саккунне тĕплĕн вĕренсе ĕç хĕрÿлĕн пуçланса кайать.

Петр Касмаков колхозник çуртне 17 çын пухăнса ларнă. Нумайĕшĕ ĕçрен килмен пирки кружок заңатине пуçлайман-ха.

— Ĕнерхи заңатинче 35 çын пулнă пулсан, паян пурте килсен 48 çын килмелле,—тет агитатор учител Соколов йулташ. Вăл сĕтел çине суйлав саккунĕ, Сталинла Конституци кĕнекисене тата кирлĕ хаçат-журналсем сарса хунă. Кружока килнĕ çынсем пĕр-пĕринпе ĕнерхи заңатинче мĕн вĕренни çинчен калаçаççĕ. Тепĕрисем—хаçатсем вулаççĕ. Вĕсем хушшинче ваттисем те, çамрăксем те, хĕрарăмсем те пур. Ваттисем кружок заңатине хастарла çÿренĕшĕн савăнса, агитатор çапла калат:

— Пăртак ăлĕкрех ват çынсене пухура чĕнсен те вĕсем унта тухасшăнах марччĕ, халĕ вĕсем шкула вĕренме çÿресе те хатĕр: пĕлесчĕ вĕренесчĕ, тесçĕ. Кружок заңатине вĕсем иртнĕ пуçмăрах пурнăçри ултавлă суйлавсем çинчен каласа парса, халăхи пирĕн демократлă суйлавшăн савăнаççĕ.

Тепĕр 15 çын килсе çитрĕç, те кружок заңатийĕ пуçланчĕ. Агитатор суйлав саккунĕ вуласа кашни пунктне уйрăмăн ăнлантарса парат.

Çапла ĕнтĕ кашни каç Нĕркеç йалĕнче çакнашкал 26 кружокра 600 çын ытла вĕренеççĕ. Вĕсене вĕрентме туллимар вăтам шкулти пÿр учителсене тата йалти коммунистсемпе комсомолецсене, активлă колхозниксене йавăçтарнă. Нумай кружоксенче суйлав саккунне вĕренессипе тĕрлĕ политикăлла ыйтусемпе çыхăнтарса, халăхи тĕнчери лару-тăру çинчен те сÿтсе-йаваççĕ. Ку ĕçе колхозниксем пуçаранне пурнăçлама тытăннă. Хăшпĕр кружоксенче 4—5 заңати иртерне хыççăн, кружок членĕсен пĕлĕвĕ чылай ÿсни палăрат. Сурскайа учительница вĕрентекен кружокри колхозниксемпе йединоличниксем хăйсем вĕреннĕ суйлав саккунĕн уйрăм глависене питĕ тĕплĕ пĕлеççĕ, тата тĕрлĕ политикăлла ыйтусем парсан, вĕсем çкие çирĕп ответсем пара ççĕ.

Кружок заңатийĕсем иртсен, шăп 8 сехетре пур пропагандис-агитаторсем те йалсовет çуртне пухăнса канашлу туса иртереççĕ. Çак канашлура вĕсем кружок заңатинче хăш агитатор мĕнле çитменлĕхсем пулнине палăртаççĕ тата агитаторсене уйрăм темăсем тăрăх коллективлă консультаци параççĕ. Çакăн пек канашлура вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлекен Павлов кружокра панă ыйтусем çине тĕрĕс мар ответленине палăртнă, ăна агитаторсем калăрнă. Агитаторсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслеме йалсовет уйрăм çынсене участоксем тăрăх çирĕплетсе тунă. Çавăнпа та кашни агитатор ĕçне тĕплĕ тĕрĕслесе пыраççĕ.

Аслă Совета суйлас умĕн Нĕркеç йалсоветĕ суйлав саккунне халăха вĕрентес тĕлĕшпе питĕ лайăх ĕç пуçарса йанă. Ку пуçарăва таврари ытти йалсоветсем те сарма тытăнчĕç.

Нĕркеçре суйлавçисен списокне çирĕп тĕрĕслесе халăх куç умне çакса хунă. Суйлав пулмалли пункт çуртĕнче хăшпĕр лозунгсемпе плакатсем çакса тунă, халăх активлă колхозниксене шкул ачисем татах плакатсем çырса хатĕрлеççĕ, суйлав кампанийĕ хĕрÿллĕн сарăлса кайни май, йединоличниксем колхоза кĕме заиавлениисем параççĕ.

Çапла ĕнтĕ Нĕркеç йалсоветĕ суйлав саккунне вĕренсе ĕçе лайăх йĕркелесе, суйлава хатĕрленессине çирĕп çул çине хăйтарса ĕçлет.

Ф. Ситтан.

Участкăри суйлав комиççи председателĕн дневникĕнчен

ИШЛЕЙ, Вăрмар Сÿктер участки. Нойабĕрĕн 16-мĕшĕнче „Красная Нива" колхозра пуху туса иртернĕ. Вăл пухура ПСК(б)Парти Обком пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-йавнă тата суйлав техникине кандидатсем çинчен ăнлантарнă.

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче „Париж Коммунĕ" колхозра кино кăтартнă. Кино пуçланиччен пухăннă халăхпа митинг туса иртернĕ. Митинтра Национаљнăçсен Советне суйлама палăртнă А. И. Стецкий (Шупашкар суйлав округĕ) тата РСФСРчен Горький суйлав округĕ тăрăх Национаљнăçсен Советне суйлама палăртнă В. П. Чкалов йулташсен биографийĕпе вĕсен ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Нойабĕрĕн 18-мĕшĕнче „Первое Мая" колхозра пулса иртнĕ пухура суйлав техники çинчен ăнлантарса панă тата Андрейева, Сахйанова йулташсен кандидатурисем çинчен агитациленĕ.

А. Шљахин довереннăй колхозри лаша таврашĕсем йусакан мастерскойра çĕнĕ суйлав саккунĕ çинчен кашни каçах ăнлантарса парат.

А. Куталкин нойабĕрĕн 21-мĕш тĕлне суйлав пÿлĕмĕсене туса пĕтерни çинчен пĕлтерчĕ.

Хаљхи вăхăтра суйлав участкинче хĕрÿлĕ ĕç пырат. Пÿлĕмсене ваљљи пĕр пек сĕтелсем хатĕрлеççĕ. Суйлавçасем ваљљи 50 карандаш илнĕ. Суйлав çуртне тул йенчен илемлетме 35 йалав хатĕрлесе хунă.

Дакабĕрĕн 12-мĕшĕнче суйлавçасем пырсан канма уйрăм пÿлĕм хатĕрленĕ. Вăл пÿлĕмре пĕр физгармоњ, биллиард, 5 балалайкă, 2 комплект шахмăт, 10 комплект шашкă, домино, мандалин тата радио пулат.

Канмали пÿлĕмрен айакрах мар буфет пур. Унта суйлавçасем печенисемпе, булкăсемпе, канфет-сахарпа чей ĕçме пултараççĕ. Унпа йунашарах ларйок.

Пÿлĕмсене çутатма 12 молни лампă, 40 лктр краçин хатĕрленĕ.

Нойабĕрĕн 12-мĕшĕнче Сазонов йулташ суйлав кунне хатĕрленес ĕç йепле пыни çинчен тĕрĕслесе тухрĕ. Унăн планĕ тăрăх, нойабĕрĕн 25-мĕшĕнче йалти активсене пухса канашлу туса иртермеле. Çак канашлура суйлав кунĕ çитиччен тата мĕн тумалине пăхса тухса, суйлав кунне пур йенчен те лайăх хатĕрленсе кĕтсе илесси пулса тăрат.

Архипов.

Елĕк йал суйлав участкинче

ЕЛĔК. Елĕк йалсоветĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе икĕ участкă тунă. Çав участкăсенчен Елĕк йал участкинче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленес ĕç начар пырат.

Елĕк йал суйлав участкине Урмай, Иштек, Вите-суч, Асамат, Елĕк, Тогач, Синер, Йанкурас йалĕсем кĕреççĕ. Участкăра ПСК(б)П райкомĕ пăхса тухса çирĕплетнĕ агитаторсен групи çук. Политвулавçăсем, политкалаçусем туса иртерекенсем уйăрман. Йанкурас йалĕнчи Сидорова йалсовет Çĕмĕрлери агитаторсен курсне вĕренме йачĕ. Халĕ вăл унтан таврăннă, нимĕн те тумаст.

Йалсенче „ССР Сойузĕн Аслă Советне Суйламали Положенине" вĕренме кружоксем организациленĕ. Анчах суйлавçăсенчен 15—20 проценчĕ суйлав саккунĕ çинчен пĕлмеççĕ-ха.

Елĕк йал суйлав участкинче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин" уйрăм статйисене пăснă. Кунта Синер йалĕнчи Золотова Марфа Григорйевна, Золотова Елена Игнатйевна (вĕсем 18 çул тултарса 19 çул çине кайнă) суйлавçăсен спискине кĕртмен. 1919 çулта çуралнă çынсене—Иванов Йевдоким Йевдокимович (Йанкурас йалĕ), Мурзаков Йаков Порфирйевич (Урмай йалĕ) йулташсене хăш уйăхра, хăш числара çуралнине пăхсах та кăтартман. Ку çеç те мар-ха, тата райĕçтăвкомра ĕçлекен Матвейев Захар Матвейевич, Елĕкре пурăнакан Быкова Матрена Петровна йулташсем хăш çулта çуралнине паллă туман. Кун пеккисем татах та нумай.

Суйлав çурчĕ Елĕкри вăтам шкулта пулмала. Шкулта 12 пÿлĕм тума палăртнă. Анчах пÿлĕмсене тумали хатĕрсем çук. Суйлав çуртне—шкула илемлетме тытăнман.

Государствă умĕнчи обйазательствăсене парса татасси те начар пырат-ха. Уйрăмăнах займ укçи пухасси чăтма çук начар. Кунта „ССР Сойузĕн оборонине тĕреклетмели займа" ĕççыннисем 3530 тенкĕлĕх çыраннă, халиччен укçине 800 тенкĕлĕх çеç пухнă. Иштек, Асамат, Йанкурас колхозĕсем займ укçи пухассипе ĕçлемеççĕ.

Ф. Филиппов.

Парти кандидачĕсен ÿсĕмĕ

(Хамăр корреспондентран)

Александр Борисов, Вера Мењшина тата Петр Грачев—виççĕшĕ те Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлеççĕ. Пĕр çул кайала комбинатра ĕçлекенсенчен вĕсене паллакансем те сахал пулнă.

Вăхăт иртнĕ. Петр Грачев техникăна алла çавăрса илнĕ. Шкаф хатĕрĕсене тунă çĕрте ĕçлесе, нормăна ирттерсе тултарма пуçланă.

— Ĕçĕн секречĕ техникăна пĕлессинче. Техникăна пĕлменни—нормăна тултарса ĕçлеме чăрмантарат,—тет халĕ Грачев йулташ хăйĕн малтанхи ĕçĕсене аса илсе.

Кăçал çуркунне Грачев йулташ парти кандидатне кĕчĕ. Партине кĕнĕ хыççăн Грачев йулташăн хастарлăхĕ тата та ÿсрĕ. Ăна нормăна тултарса ĕçлениччен кăна мар, обшчествăлă ĕçе йепле хутшăнса ĕçлениччен те аван курма пулат. Халĕ унăн йатне час-часах рабочисен аслă пухувĕсенче асăнаççĕ, ăна ырлаççĕ. Хăй те пухусенче, канашлусенче тухса калаçат. Цехри рабочисем хушшинче хаçат-журналсем вуласа парат.

Чи лайăх стахановец-обшчественника, Грачев йулташа, комбинатри рабочисемпе служăшчисем тата инженерла-техникла работниксем ССРС Аслă Совечĕн Национаљнăçсен Советне суйламали Çĕмĕрле Суйлав Округ комиççи членне суйларĕç. Халĕ Грачев йулташ Аслă Совета суйлама хатĕрленес йенĕпе мĕн пур вăйне хурса ĕçлет. Кашни кунах суйлав участкисенче пулат, участкăри суйлав комиççисене кăтартусем, пулăшусем парат. Кунсăр пуçне суйлавçăсем хушшинче „ССРС Аслă Советне суйламали Положени" çинчен калаçусем туса иртерет.

Вера Мењшина йулташ малтан сочувствуйушчисен группинче тăнă. Ăна парти кандидатне кăçал анчах куçарнă. Вăл пукансем тăвакан цехра 1932 çултанпа ĕçлет. Малтанхи вăхăтрах, нимĕнле специаљнăç та пулмантан, урайсем шăлнă, детаљсем йатса пушатнă çĕрте ĕçленĕ. Кайарахпа станок çине куçнă. Халĕ техприйомшчицăра ĕçлет. Кăçал ăна цехри рабочисем цехком председателне суйларĕç. Унтанпа вăхăт 4 уйăх иртрĕ. Çак вăхăтра Мењшина йулташ цехра ĕçлекенсенчен 82,3 процентне профсойуз ретне йавăçтарчĕ. 498 çынна социалисăмла ăмăртăва хутшăнтарнă. Рабочисем хушшинчи массăлă ĕç те лайăхланчĕ. Кашни кунах апат çинĕ вăхăтра агитаторсем калаçусем туса иртереççĕ. Мењшина йулташ хăй те вулавçă пулса ĕçлет.

Иртнĕ çулта Мењшина йулташ политграмота кружокне вĕренме çÿренĕ; кăçал ПСК(б)Парти историне вĕренмели кружока çÿрет. Калас пулат, кунта та вăл кайра пымаст. Пĕлмен ыйтусем тупăнсан пропагандисран тĕплĕн ыйтса пĕлет. Килте кĕнекесем тăрăх вĕренет.

Александр Борисов йулташ та парти кандидатĕнче кăçалтанпа çеç тăрат. Ăна кандидата комсомолтан куçарнă. Комбинатра иккĕмĕш çул ĕçлет, стахановец стољар. Кăçал çентабĕр уйăхĕнче ăна комбинатра ĕçлекенсем фабрик-завод комитет председателĕн заместителĕ пулса ĕçлеме суйларĕç. Хаљхи вăхăтра Борисов йулташ Мускавра профработниксен курсĕнче вĕренет.

Вĕсем кунтан-кун ÿссе пыраççĕ.

Çапла ĕçлеççĕ, ÿсеççĕ парти кандидачĕсем. Вĕсемпе куллен çыхăнса ĕçлени, вĕсене пулăшни кирлĕ. Комбинатри парти организацийĕ ку тĕлĕшпе çителĕклĕ таран ĕçлет теме çук. Кăçал, 5—6 уйăх хушшинче пĕтĕмпе те комсомол ретĕнчен —2 çынна, сочувствуйушчи группинчен пĕр çынна çеç парти кандидатне куçарнă. Кунсăр пуçне тата 6 çынна (Волков, Шоркин, Пономарйева, кандидата куçарма хатĕрленĕ. Комсомол организаци те чи лайăх комсомолецсене парти ретне парас тĕлĕшпе конкретлă ĕçсем тумаст.

Хар. Лисин.

Пурне те хутшăнтармала

Çĕмĕрлери „Труженик" заводра „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренме тытăннăранпа чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Хаљхи вăхăтра суйлав Положенине вĕренес тĕлĕшпе 6 кружок ĕçлеççĕ. Кружоксем заңатисене кашни кунах иртереççĕ. Рабочисем смена хыççăн ĕçрен тухсанах хĕрлĕ кĕтесе пухăнса пĕр сехет хушши вĕренеççĕ.

Механически цехри кружок Положенине вĕренсе пĕтернĕ хыççăн, мĕн таран ăнланнине тĕрĕслеме тытăнчĕ. Рабочисем кашни кунах пĕр çĕре пухăнса пĕр-пĕринчен ыйтса пĕлеççĕ. Стољарнăй, фанернăй тата хăма çуракан цехсенчи кружоксем те лайăх ĕçлеççĕ.

Кружоксене çÿрекен рабочисем пысăк хастарлăхпа вĕренме тăрăшаççĕ. Акă Петрекинапа Йеремейева йулташсем хутла пĕлменнисен шкулне вĕренме çÿренипе пĕрлех суйлав саккунне вĕренмели кружока çÿреççĕ. Вĕсем пĕр заңати те сиктермен.

Анчах суйлав саккунне вĕренес ĕçре çитменлĕхсем те пур. Пĕр çитменлĕх вăл—рабочисене пурне те вĕренĕве йавăçтарманни. Заводра çĕр çын ытла вĕренĕве йавăçтарман. Килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче те ĕç йапăх тăрат. Килхуçи хĕрарăмĕсене 34 çынна çеç вĕренĕве йавăçтарнă. Хăшпĕр агитаторсем вĕренÿ ĕçне йĕркелĕн туса пымаççĕ. Кадышов агитатор хăшпĕр чухне заңатисене хăй пымаст. Дубов агитатор вĕрентме тытăнманха. Заводри парти организацин ку çитменлĕхсене халех пĕтермеле.

Г. Семенов.

Суйлавçăсен пухувĕ

(Канашри вагонсем йусакан завод)

Нойабĕрĕн 23-мĕшĕнче Канашри вагонсем йусакан заводра суйлавçăсен аслă пухувĕ пулса иртрĕ. Пухува халăх нумай пухăннă. Вĕсем пурте хăйсем Канашри суйлав округĕнчен Национаљнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа—ССР Сойузĕн Тĕпĕçтăвком секретарĕпе—Александр Федорович Горкин йулташпа паллашма пухăннă.

Пуху ĕç туса пыракан президиум суйласан, хисеплĕ президиум суйларĕ. Хисеплĕ президиума суйлавçăсем пысăк хаваслăхпа тăвăлăн алă çупса Сталин йулташа, Политбÿро членĕсене, Димитров тата Долорес Ибаррури йулташсене суйларĕç.

Малтан районĕçтăвком председателĕ Бугров йулташ Канашри суйлав округĕнчен Национаљнăçсен Советне депутата суйлама Горкин йулташ, Сойуз Советне депутата суйлама Цыганова йулташ кандидатурисене регистрациленни çинчен тата Горький округĕнчен Чкалов йулташа суйлама регистрациленни çинчен каласа пачĕ. Ун хыççăн рабочисенчен, хĕрарăмсенчен, инженерла-техникла работниксенчен представителсем çăмах туха-туха каларĕç. Пухура плотник-стахановец Макалкин, паровой молот çинче ĕçлекен машинисткă Семенова,—Сталинла призывăн значокне илнĕ стахановец Федин, пушартан çыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен Поликарпов, инженерла-техникла работниксенчен Малыгин мастер, инструментаљнăй цехри мастер Орлиан, механик—Абрамов йулташсем тухса калаçрĕç. Вĕсем пурте пĕр шухăшлă пулса: ССР Сойузĕн Аслă Советне Чкалов, Горкин тата Цыганова йулташсене суйлатпăр тесе çăмах параççĕ, ыттисене те çавăн пек тума чĕнеççĕ.

Пухура Национаљнăçсен Советне депутата суйлама тăратнă кандидат — ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитет секретарĕ А. Ф. Горкин йулташ çăмах каларĕ. Вăл Совет Сойузĕ 20 çул хушшинче тунă çитĕнÿсем çинчен, ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламалă кампанире тăракан задачăсем çинчен каласа пачĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл, хăйне суйлавçăсемпе паллаштарас майпа хăйĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен те чылай чарăнса тăчĕ. Унăн çăмахĕ пурне те кăмăла карĕ. Пухува пынă çынсем (пин çынна йахăн) ăна хапăлласа нумайччен алă çупрĕç.

Пуху Канаш районĕнчи суйлавçăсем патне чĕнÿ йама йышăнчĕ.

Пуху хыççăн савăнăçлă вечер пулчĕ. Вечерта шкулта вĕренекенсен хорĕ, рабочисен хорĕ, т. ыт. те пулчĕç.

Çамрăк хĕрачасен районри сљочĕ

ÇĔРПÿ. Нойабĕрĕн 16-мĕшĕнче çамрăк хĕрсен районри сљочĕ пулса иртрĕ. Унта пурте Октабер пе çуралнă, суйлава пирвайхи хут хутшăнакан телейлĕ çамрăк хĕр суйлавçасем 260 çын ытла пухăннă. Вĕсем кашнийех праçник чухнехи пек тумланса пынă. Вĕсенче хаваслăх, вĕсенче йура-кула.

Сљот ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлавĕпе çамрăк хĕрачасен задачисем çинчен сÿтсе-йаврĕ.

Прениre тухса калаçакан çамрăк хĕрсем ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама пирвайхи хут саса илнĕшĕн телейлĕ пулни çинчен каларĕç.

— Епĕр,—тет Крылова,— йалхуçалăх техникумĕнчи комсомол комитечĕн секретарĕ, çамрăк, Октабĕрпе çуралса ÿсиĕскерсем, пирвайхи хут ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлатпăр. Ку пирĕншĕн, мĕн пур ĕçхалăхĕшĕн, калама çук пысăк та историлĕ кун пулса иртет.

Пирĕн пысăк правасене Сталинла Конституцинче çирĕплетнĕ. Пирĕн социалисăмла государствăра темĕн, чухлĕ хĕрарăмсем пысăк та ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ, тĕрлĕ аслă шкулсенче вĕренеççĕ. Вĕсен кашниннех пысăк ĕмĕтсем. Вĕсем кашнийех çĕршывăн паттăр патриочĕсем пулма тăрăшаççĕ, пулаççĕ те,—тет вăл.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали саккуна хĕрсем хушшинче вĕренессине, йалти вырăнсене илсен, Лапра-Кушка йалсоветĕнче тивĕçлипе организациленĕ. Çамрăк хĕрсем хушшинче икĕ кружок ĕçлет. Кружок заңатийĕсем йĕркелĕ, пысăк хаваслăхпа иртеççе. Кашни ернерех пĕр хут „ыйтусемпе ответсен" вечерĕ туса иртереççĕ. Кружок членĕсем хăйсем ăнланнă хыççăн, ашшĕ-амăшĕсене ăнлантарса параççĕ.

Сљот суйлава лайăх хатĕрленсе кĕтсе илме йышăнса хăварчĕ.

С. Павлов.

Витĕмлĕ фактсем

Суйлав участкинче агитатор пулса ĕçлеме уйăрса ман çине пысăк шанчăк хучĕç. Епĕ хаљ хам çине халăх хунă шанчăка ĕçпе çирĕплетессишĕн тăрăшатăп. Кăна тума манăн алăра кирлĕ условисемпе майсем питех те тулăх. Вĕсенчен пĕри вăл—хамăн тата хамăр колхозниксен пурнăçĕ. Епĕ 1931 çултанпа, колхоза кĕнĕренпе тулли пурнăçпа пурăнатăп. Вăл çук, ку çук, тесе мĕскĕнленместĕп. Манăн умра ĕçлеме те, вĕренме те çул уçă.

Епĕ çеç мар, пур колхозниксем те тулли пурнăçпа пурăнаççĕ. Совет çĕршывĕнчи кашни гражданинăн умĕнче телейлĕ пурнăç çулĕ уçă. Акă хамăр йалти Трофимовна Федоров йулташсенех илер. Вĕсем çулталăк хушшинче 5-шер пин кирпĕч тăвас вырăнне, 10-шар пин кирпĕч туса пыраççĕ. Стахановла ĕçленипе тулăх пурнăç турĕç. Иккĕшĕ те çĕнĕ пÿрт лартрĕç. Федоровăн çĕвĕ çĕлемелли машинă пур. Ĕне тата ытти выљăх-чĕрлĕхсем туйанчĕ. Кунашкал тĕслĕхсем вĕçĕмсĕр илсе кăтартма пулат, — çаксем ĕнтĕ манăн агитаци ĕçĕнчи пуйан фактсем пулса тăраççĕ. Вăл фактсем витĕмлĕ. Мĕншĕн тесен, вăл фактсене кашни хăйĕн пурнăçĕнче курат.

Хаљхи вăхăтра епĕр суйлав саккунне тĕплĕн вĕренес, Аслă Совета депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен сÿтсе-йавас тĕлĕшпе ĕçлетпĕр. Ку тĕлĕшпе çакнашкал ĕçсем тăватпăр: уйăхра икĕ хутчен стена хаçачĕ кăларатпăр, вулав çуртĕнче справкăсем парассине организациленĕ. Суйлав саккунне вĕренес тĕлĕшпе пирĕн йалсоветра 9 кружок ĕçлет. Вĕсенче 375 суйлавçă вĕренеççĕ.

Вĕсемсĕр пуçне суйлав саккунне тата кандидатсем çинчен килĕрен вĕрентсе çÿрессине организацилерĕмĕр. Тăвата хутчен ыйтусемпе ответсен вечерĕсем туса иртертĕмĕр.

Суйлав иртермели çуртсене хатĕрлетпĕр. Кашни суйлавçă ваљљи пÿлĕмсем, сĕтелсем пулаççĕ. Вăл пÿлĕмсене лозунгсемпе, плакатсемпе илемлететпĕр. Суйлав комиççи суйлавçăсен спискине тĕрĕслет.

Епĕ хамăн пĕлĕве, пĕтĕм пултарулăха Аслă Совета Ленинпа Сталин партине чĕререн парăнса ĕçлекенсене суйлассишĕн агитациленĕ çĕре хуратăп.

В. Андрианов.

Вăрмар р., Аслă Чак йалĕ.

Йалсовет 50 агитатор уйăрнă

ТРАК. Уйкас Йунтапа йалсоветĕнче икĕ суйлав участки организациленĕ. Вĕсенче 975 суйлавçă. Ку йалсоветра агитаципе пропагандă ĕçне анлăн сарнă. Парти райкомĕ 7 агитатор çирĕплетнĕ. Çавăн чухлĕ суйлавçăсене 7 агитатор суйлав саккунне вĕрентме ĕлкĕрейменнине шута илсе, йалсоветĕ йалти активран: учителсенчен, комсомолецсенчен тата 50 агитатор уйăрса панă. Çапла майпа пур суйлавçăна та суйлав саккунне вĕрентес ĕçе хутшăнтарнă.

Кружока пыма пултарайман суйлавçăсем патне киле кайса вĕрентеççĕ. Декабĕрĕн 12-мĕшĕ— Аслă Совета суйламали кун пулнине, Çĕрпÿ суйлав округĕнчен камсене суйлама пулассине пурте пĕлеççĕ.

Агитаторсене Захаров йулташ йĕркелесе пырат. Вăл суйлавçăсем патне ăнлантарма кайас умĕн агитаторсене тĕплĕн каласа ăнлантарса йарат. Агитаторсен ĕçне тĕрĕслесех тăрат. Вĕсемпе 9 заңати туса иртернĕ. Иљчин Никифор, Укинова Д., Порфирйев, Сотникова, Федоров агитаторсем ырми-канми ĕçлеççĕ.

М. Иванов

Фондеркин агитатор пулма тивĕçлĕ мар

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ, нойабĕрĕн 24-мĕш. Ĕнер Питĕркассинчи колхозниксен аслă пухувĕ пулчĕ. Çак пухура районри „Çĕнтерÿ çулĕ" хаçат ответлă редактор заместителĕ С. К. Фондеркин йул. Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсемпе суйлав йĕрки мĕнле пулмалли çинчен калама тапратрĕ. Вăл: „Пирĕн Совет Сойузĕнче 7 Сойузлă республикă", „Бÿллетен çине çыракан кандидатурăсене хуратса урăх хушаматсем çырма та йурат", тет. Фондеркин йанăшĕсене çиĕнчех кăтарнă пулсан та, вăл хăйĕн йанăшне йышăнмарĕ, „епĕ пĕлетĕп" тесе ирттерсе йачĕ.

К. Фондеркина парти райкомĕ районри агитатор пулма уйăрнă. Анчах вăл агитатор пулма пачах тивĕçлĕ мар. Фондеркин йул. çинчен Хĕрлĕ Чутай парти райкомĕн халех сÿтсе-йавмала.

Н. Иванов, Пр. Сатур.

* * *

семшĕн сасăлама чĕннĕ. Фабриксемпе заводсенче пухусем революцилĕ пысăк çĕкленÿпе иртнĕ. Чылай заводсенче пухура Сталин йулташ тухса каланă. Сталин йулташ Петербургра вăрттăн пурăннă. Çавăнпа, паллах, пухусенче тухса калама çăмăл пулман, йаланах полицисем тытса арĕслес хăрушлăх тăнă. Рабочи организацийĕсем тата рабочисем хăйсем те Сталин йулташа полицирен хÿтĕлеме хытă тăрăшнă.

Пухусенче пур çĕрте те тенĕ пекех большевиксем çырса хатĕрленĕ наказа йышăннă. Меншевиксене суйланă хăшпĕр предприйатисенче те çав наказах йышăннă пулнă.

Уполномоченнăйсен суйлав канашлавĕнче пурте пĕр саспа большевиксем сĕннĕ наказа йышăннă—„Петербургри рабочисем хăйсен рабочи депутатне панă наказ". Ăна Сталин йулташ çырнă. Наказăн çак текстне уполномоченнăйсем пĕр улăштармасăр тата çĕнĕрен нимĕн хушмасăр йышăннă:

„Вырăс халăхĕн 1905 ç. йухăм кăларса тăратнă требованийĕсем пурнăçа кĕмесĕр йулчĕç.

Реакци тата „çĕнетнĕ строй" аталанăвĕ çав требованисене кăнăçтармарĕ кăна çеç те мар, йăлтах урăхла, вĕсене тата ытларах çивĕчлетрĕ.

Рабочисене бастовкă тума кăна мар час-часах май памаççĕ,—мĕншĕн тесен вĕсене çавăншăн цемеç теме гаранти çук; сойузсем тата пухусем тума кăна мар,—мĕншĕн тесен çавăншăн арĕслемеç теме гаранти çук; Думăна суйлама та май памаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене çав-çавах „разйаснени" параççĕ йе тытса ăсатаççĕ:—путиловецсене тата Невари карапсем тăвакан заводри рабочисене çак кунсенче кăна „разйаснени" пачĕç вĕт.

Епĕр выçă ларакан мĕлйуншар хресченсем, помешчиксемпе земски начальниксен пуççăрлăхне тÿссе пурнаканскерсем, çинчен каламаст пăр ĕнтĕ.

Çавсем пурте 1905 ç. требованисене кăнăçтарма кирли çинчен калаççĕ.

Российăн економикăлă пурнăçĕн лару-тăрувĕ ĕнтĕ, пулас промышленнăçлă кризисăн куранса пыракан ĕнтĕ паллисем тата хресченсен йышлă сийĕсем ытларах та ытларах чухăнланса пыни 1905 ç. революцин задачисене калама çук татса пама кирлĕ туса хураççĕ.

Çавăнпа епĕр, Российа çитес массăлă йухăмсен, тен, 1905 çултинчен тарăнрах йухăмсен умĕнче тăрат, тесе шутлатпăр. Ленăри выступленисем, „разйасненине" хирĕç тунă забастовкă-протессем т. ыт. те çавăн çине кăтартса параççĕ.

Çав йухăмсене пуçарса пыраканĕ, 1905 ç. пекех, вырăс обшчествин чи малта пыракан класĕ, вырăс пролетариачĕ пулат.

Пысăк асап тÿсекен хресченсем çеç, Российăна ирĕке кăларассипе чи çывăх интересленекенскерсем, рабочи класăн сойузникĕ пулма пултараççĕ.

Икĕ фронтпа кĕрешмеле,—феодал-крепăçлă йĕркесене хирĕç тата кивĕ власпа сойуз тума шыракан либераллă буржуазийе хирĕç,—акă мĕнле форма йышăнмала çитес халăх выступленийĕсем.

Ку кĕрешÿ ĕнтĕ рабочи клас халăх йухăмĕн пуçне тăрса кĕрешнĕ таран çеç çĕнтерÿлĕ пулат.

Рабочи клас хăйĕн халăх йухăмĕн çулпуç ролне ĕçе кĕртме пултартăр тесен, вăл хăйĕн интересĕсене ăнланса илнипе тата пысăк организациленĕхпе хĕçпăшалланмала.

Думă трибуни хаљхи условисенче пролетариатăн йышлă массисене çутта кăлармали тата организацилемели чи лайăх меслетсенчен пĕри пулса тăрат те ĕнтĕ.

Шăпах çавăнпа ĕнтĕ Думăна хамăр депутата йаратпăр та, ăна тата IV-мĕш Думăн пĕтĕм социал-демократла фракцине государствă думинче саккунçем кăлармала выљăса иртерме мар, Думă трибуни çинчен пирĕн требованисене анлăн сарма хушатпăр.

Пирĕн çапла тăвасчĕ: IV-мĕш Думăн социал-демократла фракцийĕ, уйрăмăн пирĕн депутат та, вĕсемшĕн йут пулса тăракан хура Думă лагерĕнче рабочи класăн йалавне çÿлĕ тытчăр.

Пирĕн çапла тăвасчĕ: Думă трибуни çинчен социал-демократла член пролетариатăн тĕп тĕллевĕ çинчен, 1905 ç. тулли те касман требованийĕсем çинчен, халăх йухăмĕн çулпуçĕ пулса тăракан вырăс рабочи класĕ çинчен, рабочи класăн шанчăклăрах сойузникĕ пулса тăракан хресченсем çинчен, „халăх ирĕклĕхне" сутакан либераллă буржуази çинчен каланă сасăсем хытă йанăраса кайчăр.

Пирĕн çапла тăвасчĕ: IV-мĕш Думăн социал-демократла фракцийĕ çав асăннă лозунгсен никĕсĕ çинче хăйĕн ĕçĕнче пĕрлĕхлĕ те пĕтĕçÿлĕ пултăр.

Вăл йышлă массăсемпе тăтăшах çыхăнса тăнипе хăйне ваљљи вăй илсе тăтăр.

Вăл Российăри рабочи класăн политикăлă организацийĕпе пĕрле утса пытăр".

Большевикла парти вăл вăхăтра вăрттăн ĕçленĕ, терĕмĕр. Çав условисенче суйлав кĕрешĕвне хутшăнма çăмăл пулман. Унсăр пуçне тата большевиксен меншевиксене хирĕç, контрреволюцилĕ буржуазийе сутăннăскерсене хирĕç, хытă кĕрешмеле пулнă. Анчах нимĕнле йăварлăхсем те большевиксен вăй-хаватне хуçма пултарайман. Большевиксем, Ленинпа Сталин йертсе пынипе, Думă суйлавĕнче çĕнтернĕ.

Пленум решенисене сӳтсе-йаваççĕ

ВĂРНАР. Нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче районри финанс пайĕнче ĕçлекен работниксемпе перекет касси работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн IV-мĕш Пленум решенисене сӳтсе-йаврĕ.

Пренире тухса калаçакансем пурте Пленум парти Обком секретарĕ С. П. Петров çинчен йышăннă решенисене ырлаççĕ.

Районри финанс пайĕ сутуилӳ организацисен ĕçĕсене тĕрĕслесе пыман. Сутуилӳ организацисенче растратăсен шучĕ темĕн чухлех йумайланса кайнă.

Акă Вăрнар йалпонех илсе пăхар: ку йалпора растратчиксем нысăк йава çаврнă. Пĕтĕмпе 27.547 тенкĕ растрата шутланат. Йалпо правлени председателĕ Кузнецов растратчиксене хӳтĕлесе пурăннă. Йалпора ĕçлекен палла растратчик Сорокин 7000 тенкĕлĕх растрата тунă. Вăрнар йалповĕнче растратчиксем теçĕткешерĕн шутланаççĕ. Ку шута Кузнецов хăй те кĕрет.

Алкаçин йалповĕ растратчиксене пула хупăнасси патнех çитрĕ.

Çак ситменлĕхсене районри финанс пайĕ пĕлнĕ, анчах растратчиксене тăрă шыв çине кăларас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Суту-илӳ планне мĕн пурĕ те çурри ытларах кăна тултарнă. Районĕпе 375 пин тенкĕ йалхуçалăх налогĕ пухăнмала пулнă пулсан, 162 пин тенкĕ çеç пухăннă (43 процент). Займ укçи 142 пин вырăнне 12 пин тенкĕ пухăннă.

Районри финанс пайĕ укçа-тенкĕ пухас çĕрте массăпа таччăн çыхăнса ĕçлессине манăçа хăварнă.

Асăмçырми йалсовечĕ укçа-тенкĕ пухас йĕнĕпе районра чи кайа йулнă йалсовет. Йалсовет председателĕ Кураков ку ĕçре страхинструктора пулăшас вырăнне унтан мăшкăлама-кулма тытăннă.

Айкăш йалсовет председателĕ Семенов йулташ та укçа-тенкĕ планне тултарас тĕлĕшпе нимĕн тума та шутламасть. Малта пыракан йалсоветсен примерĕпе (Булатово, Кольцовка, Мăн Хирлеп) усă курмаççĕ. Финанс пайĕ (Вахрамейев йулташ) ку ĕçе организацилемен.

Канашлу финанс ыйтăвĕ тăрăх çак кунсенчех районри финанс активĕн канашлуне ирттерме, çавăн пекех тата йалсоветсенче финанс активисĕсемпе уйрăм канашлусем туса ирттерме, çапла вара плана декабĕрĕн 10-мĕшне тултармала тума йышăнчĕ.

Ст. Улангай.
А. Платонов.

Райĕçтăвком аппарачĕ таса пулмала

ТĂВАЙ. Райĕçтăвком председателĕ пулнă С. И. Иванова политикăла сисĕмлĕхе çухатнăшăн, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туманшăн, районри пĕтĕм ĕçсене йапăхтарса йанăшăн, самокритикăна пусарса пынăшăн, райĕçтăвком аппаратĕнче çемйелĕх тунăшăн, массăран уйăралса кайнăшăн, патшалăх пурлăхне салатса пурăннăшăн—партирен те, вырăнтан та кăларнă.

Анчах Иванова кăларнипех халăха хирĕçле ĕç тăвакансене аппаратран тасатса пĕтерни пулмасть-ха.

С. И. Иварбейев та Ивановăн „çулйĕрĕпех“ пынă. Райĕçтăвком председателĕн заместителĕнче ĕçлесе вăл чылай тăшманла ĕçсем тунă. Вăл халăх пурлăхне çаратса пурăнакансенчен пĕри. Вăл райĕçтăвком лашисем вальли илнĕ апатсене (сĕлĕ, йасмăк) хăй килне турттарнă. Вăлах Тăвайĕнчи пĕртен-пĕр електростанцине йухăнтарса йанă. МТС агрономне Прокопйева (хăйĕн тăванне) суйа хут туса парса „агронома“ кăларнă. Прокопйев ĕлĕк 40—50 га çĕр тара илсе Çĕнĕ Çырма йал халăхне ĕçлеттерсе пурăннине Иварбейев пытарса пурăннă. Прокопйев иртнĕ çул Çĕнĕ Çырма колхозне ирĕксĕрех пăсăлса кайнă клевер актарса колхоза пысăк сийен тунă.

Иварбейев райĕçтăвкомăн обшчий пай пуçлăхĕ пулма Тăрмăш колхозне çаратса пурăннăшăн судпа айăпларнă Андрийанова, машиниса—колхоз пурлăхне çаратнăшĕн судпа айăпланă Карсакова илнĕ. Куй пек сынсем райĕçтăвкомра туллиех. Совет аппаратĕнче совета хирĕçле ĕçлекен çынсем ларнипе райĕçтăвкомра ĕçсем йапăх пынă: йалсоветсем çумĕнчи секцисем ĕçлемен, жалăбăсене çухатса пĕтернĕ, вĕсене тĕрĕслемен.

Иварбейев 1935 çулта совета хирĕçле елеклĕ сăмахсем сарса çӳренĕ. Вăлах совета хирĕçле агитаци саракан Владимировпа Петрова хӳтĕленĕ.

Иварбейева тата ытти йурăхсăр çынсене райĕçтăвкомра тытса тăни—унти парти организацийĕн политикăла тимсĕрлĕхне кăтартать.

Иварбейевпа Ивановăн тăшманла, партине хирĕçле ĕçĕсене парти райкомĕ, унăн пĕрремĕш секретарĕ Б. В. Василйев йулташ та витĕр пĕлсе тăнă. Б. В. Василйев йулташ Ивановсем çинчен калаçма ирĕк паман.

Нойабĕрĕн 21 мĕшĕнче райĕçтăвкомăн черетлĕ пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум райĕçтăвком председателне Родионов йулташа лартрĕ. Халĕ ĕнтĕ çĕнĕ вăйпа çĕнĕле ĕçлесе пымала, совет аппаратĕнчи тăшмансене—Иварбейевсене тĕппипех, нимĕн йулмиччен кăкласа тăкас пулать. Совет суйлавне хĕрсе хатĕрленнĕ чухне йалсоветсен, пĕтĕм учрежденисен ĕçне тĕпрен çĕнетсе лайăхлатмала.

А. Каховский.

Вулав çурчĕсем хупă лараççĕ

ИШЛЕЙ. Нойабĕрĕн 21-мĕшĕнче районри Суйлав участкисенче ĕçлекен доверенныйсен канашлăвĕ пулчĕ. Пар кабинет заведуйушчийĕ Михейев йулташ доверенныйсене Совет влаçĕн 20 çул хушшинчи ӳсĕмĕсем çинчен тата доверенныйсен Аслă Совета суйлас ĕçри ответлă задачисем çинчен каласа пачĕ.

Вăрман Сӳктер суйлав участки Аслă Совета суйлама лайăх хатĕрленет. Участкăри суйлавçăсем хушшинче 11 калаçу туса ирттернĕ. Комсомолецсемпе активиссене кашнине 4 киле суйлав саккунне вĕрентме тата Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсем çинчен: А. И. Стецкий, В. П. Чкалов, З. А. Андрейева йулташсем çинчен ăнлантарса пама çирĕплетнĕ. Вĕсемех çав килсенчи хутла пĕлмен суйлавçăсене вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Вăрман Сӳктер суйлав участкинче суйлав пӳлĕмĕсене туса çитернĕ, пĕтĕмпе 12 пӳлĕм. Пӳлĕмсене çутма 25 лампă, краçын тата сĕтелсем, пукансем хатĕрлесе çитернĕ.

Тивĕш суйлав участкинче те аван ĕçлеççĕ. Вăтам шкулта вĕрентекен учителсем кашни 10 киле уйăрса илсĕ, çав килĕсенче Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсем çинчен ăнлантараççĕ, суйлав техникине вĕрентеççĕ. Владимиров доверенный хăйне шанса панă хисеплĕ ĕçе кирлĕ пек туса пырать.

Çав вăхăтрах хăшпĕр суйлав участкисенче кандидатсем çинчен агитацилес ĕçе те, суйлав саккунне тата суйлав техникине вĕрентессисене те йĕркелесе йаман. Ишек Суйлав участкинче Хураçырма йалĕнчи 44 килĕри суйлавçăсене суйлав саккунне вĕрентме Михайловна Кудрйавцева çирĕплетнĕ. Анчах вĕсем ку тарана çитсе те суйлавçăсемпе пĕр занятие те ирттермен. Çакнашкалах Аслă Совета суйлама тăратнă кандидатсем çинчен агитацилеме те тытăнман. Клуб заведуйушчийĕ Смирнов 3 занятие çеç ирттернĕ. Колхозра „Сталинец“ стена хаçачĕ тухмасть. Промартель культработникĕ Г. Митрофанов Аслă Совета суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Çĕнйал Покровскинчи вулав çурчĕ хĕрсе суйлава хатĕрленес вăхăтра 3 кун хупă ларнă. Вулав çуртĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлассин çинчен кăларнă плакатсем те, кĕнекесем те çук. Катраçри вулав çуртне сивĕтме пуçланăран вара хутман. Унта суйлав пирки çырнă ĕнекесене хунарпа шырасан та тупайман. Вулав çурчĕн пуçлăхĕнче Малыгин йатлă вата çын ĕçлет, вăл туррă ĕненет. Катраçра вата суйлавçăсене суйлав саккунне вĕрентме, çавăн пекех кандидатсем çинчен ăнлантарса пама тытăнман.

В. Сергейев.

Ик-виçшер йĕркен

★ Вăрнар районĕнчи перекет касси кăçалхи нойабĕрĕн 15-мĕшĕнче тĕлне государствăн шалти займĕсем тăрăх пĕтĕмпе 42.907 тенкĕ выльăх укçи тӳленĕ. Вăл шутран Иккĕмĕш пйатилеткă (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займăн 4-мĕш тиражĕ тăрăх 38.079 тенкĕ тӳленĕ.

★ Трак районĕн и Молотов йачĕпе тăракан колхозра ĕçлеме пултарайман инвалидсем 6 çын шутланаççĕ. Йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх, колхозниксем инвалидсене пулăшма кăçал тунă тырпултан 2 процент уйăрса хăварнă. Колхоз кăçал вăйлă тырпул туса илнĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 8-шар килограм тĕштырă тивет.

★ Нойабĕрĕн 28-мĕшĕнче Ишлей районĕнче колхозсенчи тата бригадăсенчи стена хаçат редакторĕсемпе ĕçйалкорсен районри канашлăвĕ пулса иртет. Канашлу ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленессин тата пичет задачисем çинчен ыйту сӳтсе-йавать.

Халăх тăшманĕсен йулашкийĕсене тĕппех кăкласа пĕтерер

Вăрнарти зооветеринари техникумĕнче нумай вăхăт хушши халăх тăшманĕсем (Лонгвиненко, Денисов, Краснов, Йермаков) сăтăр туса пурăннă. Вĕсем, Çĕрĕç халăх комиссариачĕн выльăх-чĕрлĕх управленинче ларнă тăшман Павлов хӳтĕлесе тăнипе, государствă укçине çаратнă тата техникумра вĕренӳ ĕçне йапăхтарса йанă. Асăннă тăшмансене ĕнтĕ тăрă шыв çине кăларнă. Анчах çав тăшмансемпе пĕрле пулнă çынсем, сăтăрла ĕçсене тунă çĕре хутшăннăскерсем, тасанах йулнă-ха.

Техникум директорĕ пулнă Лонгвиненкон тăшманла ушкăнĕнче вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ пулнă Трйаков та тăнă. Вăл, парти билечĕпе витĕнсе, Лонгвиненко кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртекенни, самокритикăна пусарса, тăшмансене хӳтĕлесе тăраканни пулнă. Трйаков—кулак йăхĕнчен тухнăскер (Упакасси, Йĕпреç р.). Ахаль мар ĕнтĕ техникумра ăна тăрă шыв çине кăларасси сисĕнсен, Трйакова хăвăртрах Çĕрĕç халăх комиссариачĕн аппаратне илсе кайрĕç. Трйаковăн тăшманла ĕçĕсене халĕ те вĕçне çитиех тăрă шыв çине кăларман-ха, ăна ĕçрен кăларнă та лăпланнă. Ку вăл ытла та çемçешкелле пулать!

Лонгвиненко ушкăнĕн сăтăрла ĕçĕсене (государствă укçине çаратнине) тӳрремех пытарса тăраканĕ райĕçтăвком бухгалтерĕ Никишов пулнă (ĕлĕк пуп пулнăскер). Вăл техникумăн укçа-тенкĕ ĕçĕсене тĕрĕсленĕ пек туса, сăтăрлăха пĕтĕмпех пытарнă. Анчах Никишова çавăншăн никам та ответ тыттарман ха.

Техникумра та Лонгвиненкосен хӳрисем йулнă-ха Вĕсем иртнĕ вăхăтра та сăтăр тунă, халĕ те çапла сăтăр тăваççĕ.

Акă, учхоз директорĕ В. А. Андрейов. Вăл техникумăн хуçалăхне хăйĕн хуçалăхĕ вырăннех шутлать пулас. Хăй ĕнине техникумăн выльăх апачĕпе тăрантарса усрать. Вăрнара, хăй патне, учхозăн утине кӳрсе тултарчĕ. Йĕркесĕр чупса учхозăнне темиçе лаша пăсса сутрĕ. Двигателе ним сăлтавсăр сутса йачĕ. Пĕр трактора йурăхсăра кăларчĕ. Уйри тырра çĕртсе йачĕ. Йурийех тата тăтăшах сăтăр туса пыни пулмасть-и-ха ĕнтĕ вăл? В. А. Андрейев кулак йăхĕнчен тухнăскер. Унăн тăшманла ĕçĕсем халь тин пуçланман. Вăл райĕçтăвкомăн аслă агрономĕ пулнă чухне, хăйĕн ĕçри положенипе усă курса, Пĕнер разйесĕнче çурт вырăнĕ илчĕ (Вăрнарта çурт вырăнĕ пулнă пулин те). Унта çурт лартрĕ те, спекуляцилла хакпа сутса йачĕ. Усламне самайах илчĕ пулас çав!

Техникум учхозĕнче ĕçлекен П. Г. Браньков та государство пурлăхĕ çине ал тăсаканскер. Ăна ĕне кирлĕ пулнă, анчах унăн хаклă парса илес килмен. Вара вĕсем, Андрейевпа пĕрле, учхозăн пĕр ĕни пăрахăçа тухна тесе акт çыраççĕ те (ĕни сывăскер), ĕнене Браньков йӳнĕ хакпа туйанса йарать. Халь, суйа актăна пăрахăçа кăларса, ĕнине кайала илнĕ. Анчах çакăншăн Бранькова,—çитменнине вăл комсомол райкомĕн членĕ,—нимĕнле ответ та тыттарман.

Техникумăн учхозĕ 1931 çултанпа та пĕртте малала кайман. Пăхса вĕренмели те колхозсен выльăх-чĕрлĕх фермисенче кунтинчен ытларах. Ку ахальтен мар пулĕ... теççĕ учхоза пырса куракансем.

Ахальтен мар çав. Техникумра халăх тăшманĕсем сăтăр туса пурăннă. Вĕсен хӳрисем халĕ те йулна-ха. Районри организацисем çавна пĕлеççĕ пулин те, сăтăрлăха, сăтăрлăх сийенĕсене тĕппех пĕтерме тăтăкла ĕçсем тумаççĕ-ха. Анчах вăхăт кĕтмест, халăх тăшманĕсен йулашкийĕсене тĕппех кăкласа пĕтермеле.

Семенов.

Комсомол райкомĕ физкультура ĕçĕпе интересленмест

Йĕпреç районĕнчи колхозсемпе аласта ертелĕсенче йулашки иккĕ-виçĕ çул хушшинче республикĕпе палла спортсменсем ӳссе çитĕнчĕç. Хыркасси йалĕнчи „Комбайн“ колхоз членĕ Петров йулташ республикри ăмăртура хăварт чупас йĕнĕпе малти вырăна тухнă. Нумай пулмасть вăл Мускавра пулса иртнĕ марафонла чупура пĕтĕм Сойузĕпе 15-мĕш вырăн йышăннă.

„Кооплеспром“ ертелĕнчи станочница Пашкова республикра иртнĕ ăмăртура иккĕмĕш вырăн йышăннă. Колхозницăсенчен йĕлтĕрпе лайăх çӳрекенсем те нумай. „Комбайн“ колхозри Василйева 5 километра 34 минутра тухнă.

Çавăн пек палла спортсменсене малала ӳссе пыма кирлĕ условисем туса парас тĕлĕшпе никам та ĕçлемест. Райĕçтăвком çумĕнчи физкультура комитечĕн руководителĕсем колхозсенчи физкультурниксемпе ĕçлемеççĕ. Комитетра ĕçленĕ Павлов ĕçукçи илма çеç килсе çӳренĕ. ГТО значокĕсене нормăсем паман çынсене укçала сутса укçине хăй кĕсйине чикнĕ. Унăн ĕçне никам та тĕрĕслемен. Хальхи вăхăтра физкультура комитечĕн инструкторĕ пулса Зайцев ĕçлет. Вăл та нимĕнле ĕçсем те тумасть.

Районра лайăх ĕçлекен физкультура кружокĕсем те пур. „Комбайн“ колхозри тата „Кооплеспром“ аласталасăх ертелĕнчи кружоксем çамрăксене физкультура ĕçне йавăçтарас тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Анчах вĕсен опычĕсене пур çĕре те сарасси пирки районри физкультура комитечĕ нимĕн те тумасть.

Хĕл кунĕсем çывхарса çитрĕç. Кунта хĕллене хатĕрленме тытăнман-ха. Физкультура комитечĕн 10 йĕлтĕрсĕр пуçне урах нимĕн те çук. Йĕлтĕрсен те патаккисем çук. 1937 çулхи сметă тăрăх инвентарсем илме 1176 тенкĕ уйăрнă. Ку укçана нимĕскер илмесĕрех салатса йанă. Райĕçтăвком кăçал 20 пин тенкĕ расхутласа пысăк стадион турĕ. Ку стадионпа та тивĕçлĕн усă курмаççĕ.

Физкультура ĕçĕ йапăхса кайни вăл ĕçпе комсомол организацийĕ ĕçлеменнинчен нумай килет. Комсомол организацийĕ физкультура ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе нимĕн те туман. Комсомол работникĕсем физкультура ĕçне хăйсен ĕçĕ тесе шутламаççĕ пулас.

И. Алексейев.

Участкăсенче ларйоксем хатĕр мар

КӲКЕÇ. Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ нойабĕрĕн 20 мĕшĕнчен кайа йулмасăр мĕн пур суйлав участкисен центрĕсенче кулен кирлĕ таварсем сутма ларйоксемпе буфетсем организацилеме хушса постановлени йышăнна. Иккасси кооперативĕ çак постановленире кăтартс панисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе нимĕн те тумасть. Суйлав кунхине суйлава пынă колхозниксем валли буфет уçма çуртсем тулман, сутă тăваканнисене те уйăрса хуман. Йалпо председателĕн заместителĕ М. Осипова: Епĕр суйлав ирттерме план тунă. План тунă тăк пулатех,—тесе ларать.

Ив. Чирков.

Чăваш хорĕ № хулинче

(Красноармейец çырăвĕ)

Епĕр, 1937 çулта призыва тăрса Хĕрлĕ çара кайнă красноармейецсем, № хулинче (Туркмен ССР) Чăваш хорĕ организацилерĕмĕр. Хорта пĕтĕмпе 25 чăваш красноармейец тăраççĕ, руководителĕ Иван Владимиров.

Октябĕрти Социалисăмла Аслă революци 20 çул тултарнă уйавра Чăваш хорĕ 4 тĕслĕ йурă йурласа пачĕ, красноармейецсем Чăваш ташшисене ташласа кăтартрĕç. Ытти красноармейецсем Чăваш йурри-ташшисене калама çук хаваслăн хапăл турĕç.

Епĕр, орденлă республикăн çамрăкĕсем, тăван çĕршыв пире социалисăмла чикĕсене хурал тăма шаннăшăн вĕçĕ-хĕррисĕр савăнатпăр. Епĕр икĕ хутчен „Хĕрлĕ çалтăр“ орденĕ илнĕ пограничнăй отрйадра пурăнатпăр. Епĕр вĕренӳре те, ĕçре те "отлично" тата „хорошо“ паллă илесшĕн кĕрешетпĕр. Пирĕн тăван çĕршыв чиккисене хурçă çарапа питĕрнĕ. Пирĕн чиккесене никам та пырса тĕкĕнеймест!

В. Демйанов.

Хула халăхне—пахча-çимĕç

Шупашкар халăхĕ валли кăçал хĕл каçипех пахча-çимĕçĕ çителĕклĕ пулать. Ку тĕлĕшпе Чебторг чылай пахча-çимĕçĕ хатĕрленĕ.

Нойабĕрĕн 10-мĕш тĕлне çĕрулми 1049 тонна, купăста 386 тонна, кишĕр 355 тонна, чĕкĕнтĕр 62 тонна, сухан 28 тонна, [illegible] хăйар 28 тонна, помидор 44 тонна, кăмпа 5 тонна хатĕрленĕ.

110 тонна купăста, 18 тонна хăйар тата помидор тăварласа хунă.

Çĕнтябĕр, октябĕр, нойабĕр уйăхĕсенче арбуз 98 тонна, йавăçулми 45 тонна, çырла 15, 5 тонна сутнă.

Пахча-çимĕçсене татах хатĕрлеççĕ.

Укçа-тенкĕ планне Чăваш АСС Республикĕнче мĕнле тултарса пынине кăтартакан СВОДКĂ (IV-мĕш квартал, нойабĕрĕн 21-мĕшне)

Район йачĕсем	Плана пурнăçланă (процентпа)
Шупашкар хули	57,3
Трак	50,5
Вăрнар	49,1
Сĕнтĕрвăрри	48,1
Пăрачкав	47,2
Çĕрпӳ	46,2
Тутаркас	45,4
Йĕтĕрне	45,2
Канаш	44,1
Куславкка	44,1
Улатăр хули	43,1
Улатăр	42,5
Куславкка	41,7
Шăхасан	41,7
Елĕк	41,3
Çĕмĕрле	41,1
Тăвай	41
Турхан	40,7
Йелчĕк	38,7
Йĕпреç	38,5
Шăнкăртам	37,6
Хĕрлĕ Чутай	37,4
Патăрйел	36,7
Вăрмар	34,5
Шăмăршă	32,9
Ишлей	32,5
Шупашкар	31
Пĕтĕмпе	40,8

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„99 пăт тырра пĕтерчĕ“

Ку заметкăра Йетĕрне районĕнчи „Ыраш“ колхоз завхозĕ Штанков Петрăн 99 пăт тырă тухманни çинчен çырнăччĕ.

Заметкăна тĕрĕсленĕ хыççăн, Йетĕрне районĕн прокурорĕ çапла çырса пĕлтерчĕ: „Заметка тĕрĕс. Штанков Петра айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă“.

„Сăтăрçăсемшĕн колхозра вырăн çук“

Вăрнар районĕнчи Йермошкăпа Поганка йалĕсенчи Калинин йачĕпе тăракан колхоза хĕсĕнсе кĕнĕ Махоркинпа Абрамов тăшмансем икĕ йал хушшинчи колхозниксене хирĕçтересси, колхоз правлени çинчен елексем сарасси, икĕ йала пĕр-пĕринчен уйăрса пĕр колхозран икĕ колхоз „организацилес“ ыйту шухăшласа кăлараççĕ. Вĕсем колхоза уйăрса пусу çавăрнăшне тĕпренех пăсасшăн, колхоза салатасшăн пулнă. Махоркин кулак ывăлĕ, правленире учотчик пулса „ĕçленĕ“. Вăл учот ĕçне йапăхтарнă, хăшпĕр колхозниксенне 10—15-шер ĕçкунĕ çырмасăр хăварнă. Йалсовет председателĕ А. Абрамов, колхоза кĕнĕ чух лашине сутса кĕнĕскер, тăшмансен ушкăнне кĕрсе ӳкнĕ. Кăçалхи тупăша валеçнĕ чухне колхозниксем хушшинче хирĕçӳ кăларса йарса, колхоза салатса йарас план хатĕрленĕ. Çав майпа вĕсем вăрттăн пухусем туса ирттереççĕ, тесе çырнăччĕ Иванов йулташ.

Ку заметкăна Вăрнар райĕçтăвкомĕн президиумĕнче сӳтсе-йавнă. Заметкăра çырнисем тĕрĕс пулнă. Президиум Абрамова йалсовет председателĕнчен кăларнă, Махоркин тăшманăн ĕçне тĕрĕслеме следстви органне хушнă.

СУД

Тивĕçлипе айăпланчĕç

Упи йалĕнчи (Трак р-нĕ) Андрейев Семен хăйĕн арăмне кулен-кунах хĕнесе пурăннă. Асапă чăтаймасăр, хĕненипе унăн арăмĕ хĕне кайнипе чирлесе вилет. Арăмĕ вилнĕ хыççăн, Андрейев нумайах та пурăнмасть, 1937 çулхи ийул уйăхĕнче Тосай йалĕнчи Степанова Йевгенине качча илсе мăшăрланать. Андрейев арăмĕпе пĕрер уйăх хушши аванах пурăнать. Степанова колхозра тăрăшса ĕçленĕ, вăл ĕçлеме йуратнă.

Упăшкийĕ Андрейев, Тури Кушар йалĕнчи Архипов кулакпа çыхăнса ĕçке йерсе кайса арăмне курайми пулнă, хĕненĕ, вăрçнă.

Октябĕрĕн 26-мĕшĕнче Степанова авăн çапнă çĕртен килне таврăнать. Килне таврăнсанах Андрейев Степановăна мăйĕнчен çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ.

Çакă тискер ĕçе Трак районĕнчи халăх сучĕ нойабĕрĕн 19-мĕшĕнче пăхса тухрĕ. Андрейев преступнике УК 136-мĕш статйипе айăпласа 10 çул тĕрмене хупмала, тĕрмерен тухнă хыççăн 3 çул хушши суйлав прависĕр хăвармала. Архипов кулака Андрейева арăмне вĕлерме хĕтĕртнĕшĕн уголовнăй кодексăн 17—136-мĕш статйипе 6 çул тĕрмене хупмала, тĕрмерен тухсан 3 çул суйлав прависĕр хăвармала пригăвăр йышăнчĕ.

Тискер ĕç тăвакан преступниксене халăх сучĕ тивĕçлипе айăпларĕ. Суд тунине курма пынă колхозниксем халăх сучĕн пригăвăрне ырларĕç.

КĔСКЕН

★ **ГЕКТАРТАН 1600 ЦЕНТНЕР САХĂР КĂШМАНĔ.** Киргиз ССРеспубликĕнчи колхозсем кăçал питĕ пысăк тухăçлă сахăр кăшманĕ çитĕнтернĕ. Калинински районри „III Интернационал“ колхозра палла стахановкăсем Тезикбайева Шаирбӳрӳ тата Оторбайева Турсун гектар пуçне 1300—1600 центнер сахăр кăшманĕ çитĕнтернĕ. „Гай“ колхозра сахăр кăшманĕ акнă пĕтĕм çĕр талкăшĕнчен вăтам шутпа кашни гектар пуçне 550 центнер сахăр кăшманĕ илнĕ.

★ **ГЕКТАРТАН 50 ЦЕНТНЕР РИС.** Сталински районри Молотов йачĕпе тăракан колхозра (Киргиз ССРеспублики) вăтам шутпа кашни гектартан 50 цен. рис пухнă.

★ **ПИАНИССЕН ПĔТĔМ СОЙУЗРИ КОНКУРСĔ.** Искусствăн Пĕтĕм Сойузри комитечĕ пианиссен конкурсĕ организацилет. Конкурса ССР Сойузĕнчи чи лайăх пианиссем хутшăнаççĕ. Конкурс валли 10 премии уйăрса хунă. Пĕрремĕш премии —10,000 тенкĕ пулать.

★ **ЛЕНИНГРАДРИ ПУРĂНМАЛИ ÇУРТСЕН СТРОИТЕЛСТВИ.** Çак çулхи вуна уйăх хушшинче Ленинградра çĕнĕрен 57 çурт тунă. Вĕсенче пурăнмали пĕтĕм талкăшĕ 72 пин тваткăл метр. Çуталăк пĕтнĕ тĕле тата 27 çурт туса пĕтереççĕ.

★ **КИТАЙ ЙАЛĔ ÇИНЧЕН—ВЫСТАВКĂ.** Ленинградра, аслăлăхсен Академин етнографипе антропологи Музейĕнче, Китай йалĕн пурнăçне кăтартакан выставкă уçнă.

★ **ГИРĔ ЙАТАКАН ХОТИМСКИН РЕКОРЧĔ.** Кийев хулинчи С. В. Коснор йачĕпе тăракан физкультура Дворецĕнче Украинăри комсомолăн X-мĕш сйесĕ йачĕпе пулса иртнĕ физкультура праçникĕнче „Спартак“ обшчествин членĕ Хотимски йулташ икĕ алăпа 116,5 килограм йатса çĕнĕ рекорд тунă. Ку рекорд çурма йавăр виçелĕ гирĕ йатакансен пĕтĕм тĕнчери рекордĕнчен те ытларах.

★ **РУСТАВЕЛИ ЙУБИЛЕЙНЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ.** Грузире декабĕрĕн йулашки кунĕсенче пулса иртекен Шота Руставели çуралнăранпа 750 çул тултарнă уйава хĕрӳллĕн хатĕрленеççĕ. Тбилисири государствă музейĕнче Грузи халăхĕн генийĕ поечĕ çинчен „Руставели тата унăн епохи“ йатлă пысăк выставкă уçăлать. Выставкă музейĕн икĕ хутне йышăнать.

„Петр I“ кинокартинă Йелчĕкре

Тутар республикĕнчи куçса çӳрекен калаçакан кино Пăва хулине кайнă чух Йелчĕк районĕн центрне кĕрсе 2 кас „Петр I“ йатлă историлле кинокартинă кăтартрĕ.

Çак кинона курма район сывăхĕнчи йалсенчен колхозниксем нумай килчĕç. Çапла вара 2 касра 357 çын кино курчĕ.

Гер. Иванов.

Колхоз театрĕн гастролĕ

Сĕнтĕрвăрринчи колхоз театрĕ Биль Белоцерковский çырнă „Пограничниксем“ пйесăна кăçалхи сезонра Сĕнтĕрвăрри хулинче тăвата хутчен выльаса пачĕ. Хула халăхĕ спектăкале пысăк хаваслăхпа пăхать.

Нойабĕрĕн 17-мĕшĕнче театр Вăрмар тата Тăвай районĕсене гастроле тухса кайрĕ. Театăр гастрольре те „Пограничниксем“ пйесăнах лартса парать.

С. Апанайев.

Филармонинче ĕçлеме

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи искусствă ĕçĕсен управленийĕ, Чăваш республикĕнчи иккĕмĕш радиофестивальре хăйсен пултарулăхне тухса кăтартнă йурă ăстисене—Шовгутский (Канаш р.), Карачаровский (Улатăр), Есливанов (Куславкка) йулташсене тата балалайкăпа мăстăр выльакан Красношчекова (Çĕмĕрле) Чăваш государствă филармонинче ĕçлеме Шупашкара чĕннĕ.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкарти спирт заводне
Йуристконсульт
Счетовод-картотетчик
Бухгалтер
КИРЛĔ
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх. Аслă бухгалтер патне пымала.
ДИРЕКЦИ.
2—1

Шупашкарти кирпĕч заводне
БУХГАЛТЕР-производственник
ТЕХНИК-строител
СЕКРЕТАР кассир
кирлĕ
Чувашскайа урамĕ, 66.
Телефон № 4—94

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала тавăрмаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 889. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2370. Тираж 13964. 58—92 см. 1—1 п. л.